Инв. № 9963 3053
Ч1-94

А. Кăлган
В. Алагер

# НАРСПИ

5
O.I.K.

А. Кăлган, В. Алагер

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ____
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
10 мая 1941 г.
Подпись Степанова.

# НАРСПИ

К. В. ИВАНОВĂН „НАРСПИ“ ПОЭМИ
ТĂРĂХ ÇЫРНĂ
4 АКТЛĂ, 9 КАРТИНĂЛЛĂ ДРАМА

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ■ 1941

## ВЫЛЯКАНСЕМ:

Нарспи.
Михетер.
Карчăк.
Сетнер.
Сетнер амăшĕ.
Тăхтаман.
Сентти.
Хăйматлăх.
Мăн кĕрӳ.
Шăпăрçă.
Тарçă.
Элексĕ хĕрарăм.
Куштан каччă.
Вăйăри яш-кĕрĕмсем, туй халăхĕсем.

---

# ПĔРРЕМĔШ АКТ

## 1-мĕш картина

Михетер кил-çурчĕ. Сулахайра çӳлĕ пусмаллă пысăк пӳрт, сылтăмра, ăна хирĕç—шурă лаç. Хыçалта икĕ хутлă кĕлет. Ун таврашĕнче Михетерĕн тарçисем тем ĕçлесе хĕвĕшсе çӳрени курăна-курăна каять. Кĕлетĕн аялти пусми çинче ватă шăпăрçă шăпăр юсаса ларать. Ун умĕнчен пĕр тарçă витрепе шыв йăтса иртет.

Ш ă п ă р ç ă
*(тарçа).*

Ĕçчен çыннăм, тăхта-ха,
Шыв ĕçтерсе хăварсам:
Пырăм типсех çитрĕ-çке
Шăпăрăма юсаса.

Т а р ç ă
*(шыв витрине парса).*

Кĕресчĕ сан пӳртелле:
Хуçа сăра ĕçтерĕ.
Шăпăрçăна шывпала
Хăна туни чипер-им?

Шăпăрçă
(*шыв ĕçсе*).

Хей, тăванăм, ан васка,
Тивĕççĕрех юлмăпăр;
Йӳçĕ-хаяр сăрине
Туй пуçлансан ĕçĕпĕр.

Тарçă
(*витрине каялла илсе*).

Пирĕн ватă Михетер
Туй пуласса кĕтмест ав,
Хăйматлăхпа иккĕшĕ
Халех пуçланă шăв-шав.
(*Пӳртре юрлани илтĕнет.*)
Хуçасене кĕреке,
Пире—шăпăр шăтăкĕ.

Шăпăрçă

Анчах, епле пулсан-та,
Ӳпкелешме кирлĕ мар.
Каях, тăван, ĕçне ту.
Каç пуласси инçе мар,
Час пуçланĕ кĕтнĕ туй...
Сăпай кăмăллă пулар.

Тарçă

Ырă хуçа Михетер
Хытă кукар иккенне

Эпир аван пĕлетпĕр.
Ахалех мар хăй хĕрне
Качча парать ват çынна.
(*Каять.*)

Шăпăрçă

Хей, ара, мĕн сана...
Пире пулсан—туй пултăр,
Туй пултăр та çуй пултăр
(*Шăпăрне каласа пăхать.*)

Пӳртрен пусма çине Михетер карчăкĕ тухать, картиш тавра пăхкалать те пусма тăрăх анать.

Карчăк

Ăçта çавсем, пĕри те
Курăнмаççĕ куç тĕлне.
Эй, тарçăсем, илтетри?
Шăлса кайăр картишне!
Çичĕ ютран килекен
Çӳп-çап ăшне ан путтăр,
Пĕтĕм аслă килхушши
Таса çатма пек пултăр.
(*Лаç алăкне шаккаса.*)
Нарспи, хĕрĕм, уç-халĕ.
Икерчӳсем пиçрĕç-и?
Хăйматлăха çитерме
Лайăх, тутлă пулчĕç-и?
(*Лаçça кĕрсе каять.*)

Хыçалти кĕтесрен хайхи тарçă картиш шăлса тухать.

Шăпăрçă

Килхушшийĕ тап-таса,
Ахаль тусан кăларан.

Тарçă

Çапла та вĕт, шăлмасан
Ыр пулас çук карчăкран.

Карчăк сăра витри, Нарспи ывсăпа икерчĕсем йăтнă, лаçран тухаççĕ.

Карчăк

Çук, çук, хĕрĕм, унашкал
Куççуль тăкни аван мар.
Аçу-аннÿ кăмăлне
Кÿрентерсе ан хăвар.
Пĕлеп вĕт эп, куратăп
Эсĕ мĕншĕн йĕнине...

Нарспи

Пĕлетĕн те, туймастăн
Хĕрÿ епле çуннине.

Карчăк

Тепĕр тесен, макăрах!
Чаранăн-ха, ак, хăвах.

Хĕр куççулĕ сывлăм пек—
Хĕвел пăхать те типет.
(*Кĕрсе каяççĕ.*)

Шăпăрçă

Чĕлхи усал карчăкăн,
Пĕрмай лăркать, ятлаçать.

Тарçă

Нарспи, мĕскĕн, çав тери
Туй пуласран хуйхăрать.
Çураçиччен шăпчăк пек
Юрла-юрла çÿретчĕ,
Каçпа вăйя тухсассăн
Яла илем кÿретчĕ.

Шăпăрçă

Йăли çапла, тăванăм:
Ялан вăйă-кулăпа
Пурăнма çук тĕнчере.
Вăхăчĕпе хулăпах
Çунтараççĕ те пире...

Тарçă

Хĕрхенетĕп Нарспие:
Чун савнинчен уйрăлать,
Сар чечек пек хитрескер
Ват çын арăмĕ пулать.
Куртăм эпĕ каччине;

Пичĕ-куçĕ пит усал:
Лаптак сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал.
Кутăн чăваш иккенĕ
Пĕрре пăхсах курăнать.
Нарспи унпа пурăнса
Ыр курассăн туйăнмасть...

Пусма çине Нарспи тухать. Вăл ĕсĕклесе макăрать. Тарçă ун патнелле картиш шăлса пырать.

Нарспи

Çичĕ ютран килчĕç те
Атте килне хăтана,
Ирĕксĕрех çураçрĕç
Çичĕ ютри пуяна...

Тарçă

Каяс килмест пулĕ çав?

Нарспи

Ах, Сементей, кала-ха,
Ăçта чикем-ши пуçа?
Çакă аслă кил-çуртра
Мана никам хĕрхенмест...

Тарçă

Хĕрхенетпĕр-çке те çав,
Анчах нимĕн тума çук.

Нарспи

Хĕрхенетĕн пулсассăн,
Пĕр ĕç туса памăн-ши?..

Тарçă

Хушсам ĕçне, тăванăм,
Сетнер пирки пулсассăн...

Нарспи

Çапла. Эппин, тархасшăн
Валак патне васкатăр...

Тарçă

Халех кайса калатăп.

(*Картишнелле кĕрсе çухалать.*)

Нарспи

Çук-ха, шанчăк пĕтмен-ха,
Эп халь атте килĕнче...
(*Лаççа кĕрсе каять.*)

Пўртрен Михетерпе Хăйматлăх тухаççĕ. Иккĕш те хĕрĕнкĕ. Шăпăрçăпа тарçă кĕрсе çухалаççĕ.

Михетер (*мухтанса*).

Ман хĕр пекки камăн пур?
Кама пўрнĕ ун пек хĕр?
Пушмак çук-и хĕрĕмĕн?
Çўрет-и вăл тенкĕсĕр?

Силпи ялĕ ĕмĕрне
Ун пек хĕрсем курас çук!
Пĕр чăваш та хăй хĕрне
Михетер пек пăхас çук!
Михетере мĕн çитмен?
Мĕнĕм çук-ши çуртăмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕртнĕ пир
Сахал-ши мĕн çÿпçемре?
Тырă-пулă туллиех
Ишĕлмест-и кĕлетре?
Çу, сĕт-турăх, сăра-пыл
Тулли мар-и нÿхрепре?

Хăйматлăх

Чăн сăмахăн суйи çук:
Сан килĕнте мĕн çитмест?
Пĕтĕм ялта пĕр пуян,
Сана никам çитеймест.
Санăн çурту хула пек,
Кĕрсен витĕр тухма çук.
Хуралтусен тăррине
Чăх-чĕп вĕçсе çитес-çук.

Михетер

Çапла çавă, хăйматлăх,
Тавах ырă сăмахшăн!
Пĕлĕпĕр-ха санпала
Хĕрĕн туйне тумашкăн.

Хăйматлăх

Нарспи туйне ял-йышсем
Тӳсеймесĕр кĕтеççĕ:
Икĕ пуян пĕрлешсен
Шеп те пулĕ туй! — теççĕ.
Сывă пул-ха, тăванăм,
Утас ĕнтĕ килелле.

Михетер

Çаплах, çапла, хăйматлăх,
Туя хатĕрленмелле...
(*Хăйматлăх тухса каять.*
*Михетер картишнелле утать.*)
Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм
Çак тарана çитерме,
Ĕнтĕ паян юлашки
Ĕçĕм пултăр хĕрĕме.
Ӳссе çитрĕ, пулчĕ хĕр —
Пуян упăшка кирлĕ,
Упăшкине тупрăмăр —
Кӳми лайăхрах кирлĕ.
Эй, тарçăсем, хăвăртрах
Туртса тухăр кӳмене!
Майлас, çуллас лайăхрах,
Çămăл пултăр çӳреме.

Тарçăсем сарайĕнчен кӳме туртса тухаççĕ, Михетер ун панче аппаланма пуçлать.

Тарçăсем
(*Михетере*).

Ыра хуçа, Михетер,
Утсем хатĕр витере:
Тасатрăмăр, çурăмăр...
Тата мĕн хушан пире?

Михетер.

Хура пÿрте кайăр та
Канăр ĕнтĕ халь пăртак.
Апатланăр, йăпанăр,
Анчах ĕçе ан манăр.

(*Тарçăсем каяççĕ.*)

Çитрĕ ĕнтĕ çимĕк те,
Хĕрĕн туйне тумалла.
Тантăшăмсем пухăнсан
Кĕçĕр туйне лартмалла.
Пирĕн чаплă туй сасси
Ян ятăр-ха таврана,
Кĕвĕçтертĕр ун сасси
Пур таврари пуяна.
Пелеп эпĕ, сисетĕп,
Маншăн пулĕ савăнăç,
Анчах, çакă туй тавра,
Тăшмансем те явăнĕç.

Ăслă пул та, чее пул,
Унта-кунта пăхсах тăр.
Апла-капла пуласран
Пӳлĕх турă сыхлатăр!
*(Пӳртрен карчăкĕ тухать.)*

Карчăк

Вăхăт мар-ши, Михетер,
Çăра йăтса ял тавра
Йăла тăрăх çаврăнма,
Ял-йышсене йыхăрма?

Михетер

Каях, карчăк. Чĕресне
Йăт та, уттар урампа.
Хĕрĕн туйне пуçлăпăр
Пĕтĕм тантăш-тăванпа.

Карчăк лаççа кĕрсе чĕреспе çăра йăтса тухать те урамалла тухса каять. Вăл кайсанах, икĕ витрепе кĕвенте йăтса, лаçран Нарспи тухать. Вăл çав тери хумханать.

Михетер
*(ĕçне пăрахса).*

Тăхта, хĕрĕм, эп сана
Пĕр-ик сăмах калас теп...
*(Нарспи патнелле пырать.)*

Ытла салху çӳретĕн.
Пăхап-пăхатăп та эп,—
Эсĕ куççуль юхтарса
Аçу ятне çĕртетĕн.

Нарспи

Эх, аттеçĕм, чĕлхене
Шăлпа çыртса чартăм эп,
Анчах вĕри куççуле
Мĕнпе тытса чарам-ши?
Хĕрĕр епле çуннине
Эсир пĕртте курмастăр,
Вăл йăлăнса ыйтнине
Ним выранне хумастăр.

Михетер

Айван халь эс, çамрăк-ха,
Ăс кĕмен-ха сан пуçна.
Пуян каччă тупнăшăн
Тав тăвасчĕ аçуна.

Нарспи

Сутăр ĕнтĕ, мĕскĕне,
Выльăх чунĕ тăварах.
Хĕрĕр пуçне çинĕшĕн
Çылăх пулĕ хăварах.

Михетер
*(çилĕпе).*

Чар çăварна, сÿпĕлти!
Мĕнле хĕр эс, чарусăр!
Аçу-аннÿ ирĕкне
Хирĕç пыни усăсăр.
Шурă çÿçлĕ аçупа
Намăс ун пек калаçма.
Сана эпир çуратнă,
Эпир тивĕç ăс пама.
Çĕкле пуçна çÿлерех,
Ан çÿре тек нăшлатса.
Ан тив Силпи хĕрĕсем
Пăхса юлччĕр ăмсанса.
*(Пÿрте кĕрсе каять.)*

Нарспи

Çăлăнăç çук... Тур çырлах!..
Ăçта кайса кĕмелле?
Пуçа çинĕ вăхăтра
Мĕскер тума пĕлмелле?
Сетнер, Сетнер, ăçта эс?
Хăтар мана тăшманран.
Вĕсем мĕскĕн Нарспине
Уйăраççĕ вĕт санран!..
*(Витрисене йăтса васкаса тухса каять.)*

ЧАРШАВ

## 2-мӗш картина

Силпи ялӗ ҫумӗнчи ешӗл ҫерем. Сулахайран ҫырма юхса иртет. Ҫырма леш енче кӗтӳ ҫӳрет. Сӑрт хӗрринче кӗтӳ ачи шӑхлич калать. Каҫма ҫинче ватӑ старик пулӑ тытса ларать. Аякра вӑрман курӑнать. Ҫырма ку енче, ҫӳлӗ валак патӗнче, ватӑ йӑмра ешӗрет. Валак пусӗнчен шӑнкӑртатса шыв юхать. Ҫавӑнтах, йӑмра айӗнче, каска выртать.

Чаршав уҫӑлнӑ вӑхӑтра кӗтӳ ачи сӑрт ҫинче шӑхлич каласа тӑрать. Ун хурлӑхлӑ кӗвви пӗтӗм таврана саланать.

Валак панче икӗ симӗс витре, вӗсем ҫинче сарӑ кӗвенте. Нарспи, каска ҫине ларнӑ та, пуҫне йӑмра ҫине тайнӑ, шӑпах ларать.

Пулӑҫ старик патне виҫ-тӑват ача пыраҫҫӗ те ӑна таҫта илсе каяҫҫӗ. Кӗтӳ ачи, шӑхлич каласах, сӑрт хыҫнелле кайса ҫухалать. Йӑмра ҫинче темле кайӑк чӗвӗлтетсе илет.

### Нарспи

Мӗн ачаран ҫакӑнта
Ӳсрӗм эпӗ выляса...
Иртсе кайнӑ вӑхӑта
Аса илме пуҫласан,
Чи малтанах куҫӑма
Савнӑ Сетнер курӑнать;
Ак, ҫакӑнта, шӑхӑрса,
Урхамахне шӑварать.
Йӑлтӑр-йӑлтӑр куҫӗсем
Ман ҫинелле пӑхаҫҫӗ,

Сар мăйăхлă тутисем
Ăшă сăмах калаççĕ...
Сетнер, тусăм, ăçта эс,
Мĕншĕн халь те килместĕн?
Хăруш вăхăт çитнине
Е асна та илместĕн?
Юлашки кун, савнийĕм!
Уйăраççĕ вĕт пире!
Ĕнтĕ санăн Нарспийĕ
Текех пулмĕ Силпире.
Текех валак патĕнче
Тĕл пулаймăн эс ăна...
Ашшĕ-амĕш ирĕксĕр
Сутрĕç хĕрне пуяна.
(*Шăппăн макăрать.*)

Аякра лаша урисем тăпăртатни илтĕнет. Çав сасă çывхарнăçемĕн çывхарса килет, вара валак патне хăйĕн урхамахĕпе Сетнер килсе тухать. Нарспи, сиксе тăрса, Сетнер патнелле ыткăнать, Сетнер ăна хирĕç васкать.

Нарспи

Сетнер!..

Сетнер

Нарспи!..

Нарспи

Турăçăм!..
(*Сетнер ытамĕнче.*)
Мĕнле нумай кĕттертĕн!

Сетнер

Каçар, тусăм, Кантăр-варта
Урхамаха çитертĕм...

Нарспи

Ах, Сетнерĕм, мĕн тери
Тунсăхларăм эп сана!

Сетнер
(*ачашласа*).

Эпĕ хам та çиçĕм пек
Хăваларăм лашана.
Пĕтĕм шухăш-кăмăлăм
Кунĕн-çĕрĕн сан çинче...

Нарспи

Ĕмĕрлĕхе уйăрса
Тăшман илсе кайиччен,
Курса юлам куç тулли.
Ах, юратнă, Сетнерĕм!
Саншăн çунса, хуйхăрса
Куçра куççуль типмерĕ.
Хĕвел ансан, каç пулсан,
Кĕçĕр туя лартаççĕ,
Хушăлкари пуянпа
Манăн туя пуçлаççĕ...
(*Сетнер кăкри çине пуçне хурса йĕрет.*)

Сетнер

Çаплах вара, Нарспиçĕм,
Çук-шим пирĕн ăраскал?
Çаплах сана ют çĕре
Илсе кайĕ-шим усал?
*(Пауза.)*

Хамăн телей çук-тăр çав...
Аçу-аннӳ пит пуян.
Хăйсен пуянлăхĕпе
Пăрăнаççĕ çук-çынран.

Нарспи

Ан ӳпкелешсем, Сетнер,
Мĕншĕн çынна ӳпкелен?
Ăçта тарса каяс-ха
Пуян атте-аннерен?
*(Пауза.)*

Сана тем пек юратса,
Чунтан савса пурăнтăм,
Анчах, çапах çак куна
Çамрăк пуçăмпа куртăм.

Сетнер каска çине ларса шухăша каять. Нарспи ун çумĕнче, Сетнер çӳçне якатса тăрать.

Сетнер

Çамрăкрах чух, айвансем,
Эпир çакна шутламан.

Пурнăç çаплах хаярне
Ун чух ним те чухламан.
Пĕрне-пĕри ĕмĕрне
Пăрахмăпăр тенĕччĕ.
„Санран пуçне никама
Каяс çук эп“, теттĕнччĕ.
Санпа эпир шутлани
Нимĕне те тăмарĕ.
Мĕнле хытă савсан та,
Пĕрлешесси пулмарĕ.
Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм,
Мĕншĕн пире уйăран?
Мĕнле айăпа кĕрсе
Çакна куртăмăр санран?

(*Пауза.*)

Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур,
Вĕсенчен те хаклăрах—
Чунăм савни, эсĕ пур...
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур...

Нарспи

Тăшман ытла хаяр, тет,
Епле унтан çăлăнас?

Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта кайса хăтăлас?

Сетнер

(*Ура çине тăрса*).

Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур...
Анчах, ăна пĕтерсен,
Унтан усал тĕнче пур.

(*Пауза.*)

Хăвăн кăмăлу пулсан,
Лашам çине лартăттăм,
Аяккалла ку ялтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм.

Валак патнелле витре йăтнă Элекçĕ хĕрарăм килет. Ăна курсан, Нарспи Сетнер çумĕнчен хăвăрт уйăрлать те витрисем патне пырать.

Нарспи

Сетнер, таврăн хăвăртрах!
Шыва анать пĕр арăм...
Чун савнипе калаçса
Уйрăлассăн туймарăм.

Сетнер

Сыв пул эппин, Нарспиçĕм.
Ан ман, чунăм, мĕскĕне!..

Юлашки хут вăйăра
Тĕл пулăпăр пĕр-пĕрне...

Лаши çине утланать те çил пек вĕçтерсе каять. Чылайччен лаша ури сасси илтĕнсе тăрать. Нарспи ун хыççăн пăхса юлать.

Нарспи

Сывă пулах, сывă пул!
Епле сана манăп-ши?
Санпа пĕрле пулмасан,
Епле ютра пулăп-ши?

Элекçĕ хĕрарăм килсе çитет те, витрисене лартса, ик аллипе пилĕкне ярса тытать.

Элекçĕ хĕрарăм

Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăран?
Каччу ытла вată-и?
Сарă çăка çӳпçӳнте
Парнӳ ытла сахал-и?
Е çав çара çерçипе
Шутланăччи пуранма?

Нарспи

Сирĕн усал куçсене
Ырри ним те курăнмасть.
Çăвару сан чараксăр,
Шăлсем катăк пулнăран.

Çын хуйхине туймасăр
Чакак пекех чаклатан.
(*Кĕвентине йăтса тухса каять.*)

### Элекçĕ хĕрарăм

Ай-яй, хĕрĕм, чĕлхÿне
Кăштах шăлпа çыртасчĕ.
Асту, эпир хамăр та
Чĕлхе енчен ăстаçă.
(*Çутă сÿнет.*)

Çутă çутăлать. Çавăнтах, анчах кас пулнă. Валак патĕнчи çерем çине уйăх çути ÿкет. Аякра ÿсĕр сынсен сассисем, туй юррисем илтĕнеççĕ. Валак патĕнчи çерем çине уяв çамрăкĕсем юрласа килсе тухаççĕ. Вĕсем хушшинче салхуллă Нарспи тата туйран тухнă ытти хĕрсемпе каччăсем те пур.

### Хĕрсем

Вăйă пуçĕ ма килмест?
Кĕçĕр вăхăт сахал мар.
Вăйăсăрах килсене
Саланмашкăн аван мар.

### Куштан каччă

Вăйă-пуçĕ килеймест:
Усĕрĕлнĕ вăл туйра.
Вăй пуçлакан хам пулап
Кĕçĕрхи кас вăйăра.

Карталанăр, тантăшсем!
Йăла тăрăх çакăнта
Вăййăмăра вĕçлесе
Уяв каçне ăсатар.
(*Çамрăксем карталанма пуçлаççĕ.*)

### Хĕрсем
(*вăйя тăнă май*).

Нарспи тантăш вăййăра
Кĕçĕрхи каç юлашки.
Ыран ăна Силпирен
Илсе каять упăшки.

### Нарспи
(*кăмăлне хытарса*).

Юлашки каç выляса
Юлас арăм пуличчен,
Юлашки каç сирĕнпе
Юрлас кăмăл туличчен.

Пурте алăран-алла тытса карталанаççĕ. Малтан хуллен, унтан хăвăрт, харăс пусса утнă май, юрлама тытăнаççĕ. Юрра хайхи каччă пуçласа ярать.

### Вăйă юрри

Шур-шур тăрăх çӳрерĕм,
Шурă акăш эп куртăм.
Шурă акăш йăвинче
Шурă тутăр эп тупрăм.

Шура тутăр ăшĕнче—
Кĕмĕл çĕрĕ—мерчен куç.
Мерчен куçлă çĕррĕмпе
Сарă хĕре илĕртрĕм,
Сăмах хушрăм, куç хĕсрĕм,
Пусма вĕçне çитертĕм.
Пусма вĕçне çитсессĕн
Виç хут тытса чуптурăм.
Сарă хĕрĕм—сарпике,
Атя каяр уява.
Ял вĕçĕнче çеремре
Вăй выляма пит аван.
Выльăпăр та кулăпăр,
Юрлăпăр та ташлăпăр...

Карталаннă çамрăксем сасартăк саланса каяççĕ. Пĕр пайĕ аяккинелле тăрса такмакласа алă çупма тытăнать, тепĕр пайĕ (малтан хĕрсем, унтан каччăсем), ташă пуçласа ярать. Çак вăхăтра Нарспи вăйăран уйрăлса йăмра хыçнелле кайса çухалать.

## Т а ш ă   к ĕ в в и

Ешĕл çерем кашма пек,
Ура шуçни сисĕнмест.
Çак уява тухсассăн,
Вăхăт иртни сисĕнмест.

Вăхăчĕсем çапла çав
Ыткăнаççĕ çамрăк чух.

Ĕç тăватпăр кун-хута,
Вăй вылятпăр çĕр-хута.

Çапла ĕмĕр иртни те
Сисĕнминччĕ, тантăшсем,
Асапĕ те, хуйхи те
Манăнинччĕ, тантăшсем.

Пĕрне-пĕри юратса,
Килĕштерсе, савăнса
Иртнермешкĕн ĕмĕре
Турă пулăштăр пире.

Айтăр халĕ савăкрах,
Тапăр халĕ хытăрах!
Пирĕн вăйă-кулăсем
Ĕмĕр тăршши кайтăрах.

Çамрăксем ташлама чарăнаççĕ. Каччăсемпе хĕрсем мăшăрăн-мăшăрăн тăрса, юрласа тухса каяççĕ.

Кустăр-кустăр кустăрма,
Кустарса та ярар-и?
Мĕнпур тантăш кар! тăрса,
Айтăр киле каяр-и?

Тепĕр енчен Сетнер килсе кĕрет. Вăл, унталла-кунталла пăхса, Нарспие шырать.

Нарспи
(*йăмра хыçĕнчен тухса*).

Кунтах эпĕ, Сетнерĕм!

Сетнер
(*ăна ыталаса*).

Нарспи, чунăм, чĕкеçĕм!
(*Чуптăвать.*)

Нарспи

Çак ытамран тухиччен,
Пĕрех—чунăм тухинччĕ!

Сетнер

Сана юта париччен,
Пĕрех—пуçăм пĕтинччĕ!

Нарспи

Ĕнен, Сетнер, тăванăм,
Телейĕм те эсĕ çеç.
Анчах ватă çăханăн
Хăрушă-çке чĕрнисем.
Мана санран ирĕксĕр
Туртса илсе кайĕç-шим?
Сар кайăк пек мĕскĕн хĕр
Çăхан хурри пулĕ-шим?

Сетнер

Çук, çук, Нарспи, ан калаç.
Сана эпĕ, сар кайăк,
Лашам çине лартăп та
Инçе вĕçтерсе кайăп.

Пӗрех сӑмах кала эс,
Пӗрех сӑмах, Нарспиҫӗм;
Каяр!—тесе каласан,
Эпӗ хатӗр, савниҫӗм!

Нарспи

Тарар, Сетнер, хӑтӑлар
Ҫичӗ ютри тӑшманран!
Сансӑр пурнӑҫ—пурнӑҫ мар,
Уйрӑлас ҫук эп санран.
(*Тухса каяҫҫӗ.*)

ЧАРШАВ.

# ИККĔМĔШ АКТ

## 1-мĕш картина

Сĕм вăрманти пĕчĕк уçланкă хĕрри. Йĕри-тавра тĕрлĕрен йывăçсем хуллен кашласа лараççĕ. Сылтăм хĕрринерех ватă лаштра юман чармакланнă.

Сĕм çĕрле. Халь çеç тăвăллă çумăр иртсе кайнă. Хушăран, таçта инçетре, аслати авăтни илтĕнкелет, вăйсăр çиçĕм çиçсе илет.

Ватă юман айĕнче кăвайтă çунать. Ун умĕнче Нарспи çаврăнкала-çаврăнкала кĕпи аркине унтан тутрине типĕтет. Çывăхрах лаша тулхăрни тата хăрăк туратсем хуçăлни илтĕнет. Ку вăл Сетнер вăрманта хăрăк пухса çӳрет.

Сетнер
(*вăрманта юрласа ярать*).

Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Шавла, кашла хытăрах!
Хаяр, усал тăшмана
Пире тытма ан ярах!

Нарспи

(*Тăн-н итлесе тăрать*).

Хăрушă-çке, Сетнерĕм,
Ытла хытă ан юрла:
Çĕрлехи сас ян çурса
Каять сĕм вăрман урлах.

Сетнер

(*юрлать*).

Хура вăрман варрине
Пĕчĕк кăна пўрт лартса,
Пурăнăттăм савнипе
Ĕмĕр-ĕмĕр савăнса...

Нарспи

Мĕнле хитре юрлать вăл,
Салху чуна йăпатать.
Хăйĕн мĕскĕн Нарспине
Мĕнле хытă юрататы!
Санпа пĕрле пулсассăн—
Нимĕнрен те çўçенмĕп,
Санпа пĕрле пулмасан—
Пуçăма та хĕрхенмĕп...
А-у! Сетнер! Кил ĕнтĕ,
Таçта çĕтсе ан кай эс...

Сетнер

(*юрласа тухать*).

Кунтах эпĕ, Нарспиçĕм,
Кунтах, савнă сар кайăк!

(*Аллинчи хăрăксене çĕре пăрахать те Нарспие хăй çумне ыталать.*)

Нарспи

(*пуçне ун кăкри çине хурса*).

Мĕнле ырă халь мана!
Ялан çапла пулинччĕ.
Пирĕн вĕри юрату
Ĕмĕр çапла çунинччĕ.

(*Сетнер кĕпи йĕпе иккенне асăрхаса.*)

Ах, Сетнерĕм, эс татах
Шыва кĕнĕ пекех-çке?

Сетнер

Хăрăк хуçса вăрманта
Çӳлтен тăкăнчĕ пуль-çке...

Нарспи

Тăрсам часрах вут умне,
Таçта шăнса ан пăсăл.

(*Хăрăк туратсене хуçкаласа вутта пăрахать. Вут ялкăшать.*)

Сетнер

Кун пеккине, тусăмçăм,
Сетнер нумай курнă вăл.
(*Кăвать умне кукленет.*)
Ăшра çулăм çуннă чух
Ку кăна вăл ним те мар.

Нарспи
(*Сетнер çамкине тытса пăхать*).

Чăнах, санăн çамку та
Калăн хĕрӳ шĕл-кăвар.

Сетнер

Телейлĕ эп, Нарспиçĕм,
Савнăç çапла çунтарать.

Нарспи
(*салхуллăн*).

Анчах... мана ку ĕçшĕн
Атте-анне мĕн калать?
Кĕçĕр кунта çĕр каçсан,
Ăçта кайăпăр ыран?

Сетнер

Малашнехи пурнăça
Мĕнле тума кирлине
Пĕлĕпĕр-ха. Ун çинчен
Калаçăпăр ирхине.

Ан кулян халь нимĕн те,
Ыранхишĕн ан хăра.
Савман çынна кайнинчен—
Тарса кайни лайăхрах.

(*Тăрса Нарспие аллинчен тытать те юман çумнех çавăтса пырать.*)

Астăватни, Нарспийĕм,
Каçсеренех эп сана
Аркăм çине лартаттăм?..

(*Нарспие хăй арки çине лартать.*)

Нарспи

Астăватăп, савнийĕм,
Астумасăр. Эс мана
Ачашлаттăн, саваттăн...
Хăш чух, ак, çапла лартса,
Юмах ярса параттăн.
Мĕнле ырăччĕ пире
Пĕрне-пĕри юратса
Пурăнмашкăн Силпире!

Сетнер

Ялти куштан каччăсем
Кĕвĕçетчĕç, вăрçатчĕç...

Нарспи

Усал чӗлхеллӗ хӗрсем
Тӗрлӗ элек саратчӗҫ:
„Мӗн тупрӑн ҫав Сетнерте?
Тӗлӗнтерен эс яла.
Вӑл сан ҫу киленче
Тарҫӑ анчах пулмалла",
Тетчӗҫ вӗсем яланах
Йӗрӗнтерсе хӑлхана.

Сетнер

Пӗлмеҫҫӗ ҫав, айвансем...
Тату, ырӑ, килӗшсе
Иккӗш пӗрле пурӑнсан,
Ҫӗр хут ытла телейлӗ
Юрлӑ ҫын та пуянран.
(*Пауза.*)
Тахҫан, ӗлӗк-авалах,
Тинӗс урлӑ ҫӗршывра,
Юмахри пек яланах
Кӗленче пек кил-ҫуртра
Пурӑннӑ, тет, пӗр пике.
Сан пек хитре сарӑ хӗр.
Пичӗ-куҫӗ пит хӳхӗм,
Хирти сарӑ чечек пек.
Икӗ куҫӗ хуп-хура,
Икӗ хура шӑрҫа пек.
Явӑннӑ тет хыҫалта

Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатнă тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çĕкленнĕ,
Çӳхе тути кулнă чух
Каччă чунĕ çемçелнĕ.

Хирти сарă чечеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?
Анчах аслă Пӳлĕхçĕн
Пулнă хăйĕн тивĕçĕ:

Çынсен чунне чухлама,
Вĕсен ăсне сăнама
Вăрттăн шухăш тытнă вăл;
Хĕр пурнакан çурт патне
Илсе пыран çул çине
Ылттăн сарса тухнă вăл.

Çулăн ик аяккипе,
Кĕрхи сарă çулçă пек,
Ылттăн выртнă йăлкăшса,
Куçа-пуçа чалăртса.
Çав çулпала хĕр патне
Куллен пынă каччăсем.

Каччă пырсан, сарă хĕр
Хирĕç тухнă сирпĕнсе:
„Мĕнле çулпа килтĕн эс?“
Тесе ыйтнă каччинчен.

„Эпĕ килнĕ çул çинче
Сарă ылттăн ялтăрать“,
Тенĕ каччă. Хĕр вара
Куççуль тăкса, хурланса,
Кĕрсе кайнă çаврăнса.

Куçа ылттăн курăнсан,
Этем ăсне çухатать;
Сар хĕре мар, ылттăна
Вăл ытларах юратать.

Çапла нумай çул иртнĕ,
Кирлĕ каччă тупăнман.
Сар хĕр патне пынă чух
Ылттăн курман çын пулман.

Анчах пĕрре çуркунне,
Хайхи сарă хĕр патне
Пырса тухнă сар ача.

Хĕрĕн ыйтуне пачах
Урăх явап панă вăл:
„Эпĕ килнĕ çул çинче
Чечек нумай,—тенĕ вăл,—

Вӗсем пурте илемлӗ,
Сан куҫусем евӗрлӗ".

Каччӑ ҫапла каласан,
Сар хӗр кулса ячӗ, тет...

Нарспи

Унтан ӑна ак ҫапла
Хыт чуптуса илчӗ, тет.

(*Сетнере чуптуса илет.*)

Ҫутӑ сӳнет, унтан татах ҫутӑлать. Ҫӳлӗ юман айӗнче Сетнер тутлӑн ҫывӑрать, пуҫне Нарспи арки ҫине хунӑ. Нарспи юман ҫумне тӗренсе, тӗлӗрсе ларать. Вӗсем ҫине тин тухнӑ хӗвел пайӑркисем вӑрман витӗр сӑрхӑнса ӳкеҫҫӗ. Вӑрманта кайӑксем юрлаҫҫӗ, кукук авӑтни илтӗнет. Ҫывӑхрах лаша тулхӑрать. Илемлӗ, ӑшӑ ҫанталӑк.

Ҫутӑ панӑ хыҫҫӑн кӑшт тӑрсан, уҫланкӑ хӗррине Куштан каччӑ килсе тухать, Нарспипе Сетнере курать те, чарӑнать.

Куштан каччӑ
(*хуллен*).

Ак, хайхисем тупӑнчӗҫ!
Епле вӗсем... ӗшеннӗ...
Сетнер, кӗлмӗҫ ҫӑпати,
Хӗр вӑрлама пикеннӗ.

Эккей вăрман тăмани!
Чим-ха, сире ку ĕçшĕн
Лайăх мунча кĕртĕпĕр.
Çара-çансем пиçиччен
Хулăпала хĕртĕпĕр.
Чĕнсе килес лешсене,
Çав упапа кĕрешме
Пĕччен вăйăм çитеймĕ.

*(Хăвăрт кăна каялла тухса каять.)*

Нарспи
*(хăраса вăранса).*

Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм...
Шартах çурчĕ чĕреме...
Мĕнле ытла хăрушă,
Тискер тĕлĕк курнă эп!
Атте йытă пулнă та,
Шăлĕсемпе шаккаса,
Сиксе çӳрет вăрманта.
„Ăçта тартăн, усал хĕр?
Пуçна çийĕп тупăнсан!"
Тет пек. Ури айĕнче
Шăтăртатать сĕм вăрман...

*(Вăрманта çатăртатнă сасăсем çывхарса килеççĕ. Нарспи тăн-н итлесе тăрать.)*

Эй, турăçăм, мĕн-ши ку?
Ура сасси евĕрлех.

Куштан каччă, Хăйматлăх тата тепĕр çамрăк килсе тухаççĕ.

Сетнер, Сетнер! Тытрĕç-çке!
Тăр, тăр! Тарса хăтăлар!

(*Сетнер сиксе тăрать.*)

Ай, пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр,
Ăçта тарса пытанар?

Куштан каччă

Çаклантăр им, капкăна!
(*Сетнер çинелле пырать.*)

Сетнер
(*Нарспине хӳтĕлесе*).

Сирĕл, вĕçкĕн каппайчăк!
Çапса çурăп çамкуна!
(*Куштан качча сирпĕтсе ярать.*)

Хăйматлăх

Лăплан, ухмах, пурпĕрех
Сана ырри пулас çук!

(*Виççĕш те Сетнерпе кĕрмешеççĕ, Сетнер парăнмасть. Нарспи ним тума пĕлмесĕр тăрать.*)

Сетнер

Çук, путсěрсем!... Чěрěллех
Сире парăнассăм çук!..

Куштан каччă

Пуян хěрне ан хапсăн!..

Хăйматлăх

Чаплă туя пăсатăн!..

Сетнер

Сире туй çеç кирлě çав...
Эрех пултăр сирěншěн...
Ăслă çынсем пулсассăн,
Тăрăшăттăр пирěншěн.

Куштан каччă
(*Çěртен алтуйи илсе Сетнере пуçран çапать.*)

Ак сана!...

(*Сетнер тайăлса каять те чěркуççи çине кукленсе ларать.*)

Нарспи
(*хаяррăн çухăрса ярать*).

Ах, Сетнер!...

ЧАРШАВ

## 2-мӗш картина

Пӗрремӗш актӑн пӗрремӗш картинӗнчи сцена.

Михетер патне ирхине туй халӑхӗ пуҫтаранни, анчах Нарспи ҫук, вӑл Сетнерпе вӑрмана тарнӑ. Ҫавӑнпа та туй ҫыннисем питӗ кичем, салху ҫӳреҫҫӗ. Унта та кунта пӑшӑл-пӑшӑл калаҫни илтӗнет. Элекҫӗ хӗрарӑмпа тепӗр ватӑ хӗрарӑм пусма ҫинчен анаҫҫӗ.

Элекҫӗ хӗрарӑм

Акӑ хайхи чаплӑ туй!
Вӑхӑтсӑрах шӑпланчӗ.
Чух пулӗ-ха вӗсене:
Ытла хытӑ мухтанчӗҫ..

Ватӑ хӗрарӑм

Хуллентерех, тӑхлачӑ,
Ҫынран кулни аван мар.

Элекҫӗ хӗрарӑм

Кулни-качки ҫавӑнта,
Анчах хамӑр мӗн тӑвар?
Туй, туй тесе тухрӑмӑр,
Мӑшкӑл тӗлне пултӑмӑр.
Михетерпе карчӑкӗ
Пире сӑйлас вырӑнне,
Йытӑ пекех ҫиеҫҫӗ
Хура пӳртре пӗр-пӗрне.

Ватӑ хӗрарӑм

Таҫтах кайса кӗмен пуль,
Часах тытса килӗҫ ак...

Элекçĕ хĕрарăм

Чее Нарспи, пĕлет вăл:
Сетнер çамрăк кăмăрчак,
Тăхтаман пек шăнăр мар...

Вата хĕрарăм

Калаçăн эс, темĕн те...

Элекçĕ хĕрарăм

Ăна-кăна пĕлетпĕр,
Çамрăк пулнă эпĕр те...
(*Хыçалалла кĕрсе çухалаççĕ.*)

Икĕ хутлă кĕлетрен хĕр суммисем çи тулли кĕмĕлĕсене шăнкăртаттарса тухаççĕ.

Пĕри

Каяр, хĕрсем, килелле,
Намăс курса çÿрес мар.

Тепри

Мĕн намăсĕ пирĕншĕн?
Кайăпăр-ха, кăшт тăхтар.

Виççĕмĕш

Ухмах пуль çав Нарспи те:
Тарса кайса мĕн тăвас?
Арçын туйĕ килсессĕн,
Ĕнтĕ халĕ мĕн калас?

Пӳрт пусми патнелле пыраççĕ. Вĕсене хирĕç пӳртрен Михетерпе карчăкĕ хытă ятлаçса тухаççĕ.

Михетер

Хĕрне сыхла пĕлместĕн,
Амĕш вĕт эс, тăмана!
Пĕтĕм ял-йыш умĕнче
Намăс кăтартрăр мана.

Карчăк

Ху айăплă, путсĕре
Ачашласа ӳстертĕн.
Ун кусĕнчен пăхнипех
Чарусăра вĕрентрĕн.

Михетер

Хуп, çăварна, сӳпĕлти!
Мĕн çӳретĕн ман хыçран!
Сансăр пуçнех ват пуçăм
Тухса карĕ ăс-тăнран.

(*Хĕр-çумсене.*)

Епле эсир сыхлайман?
Хĕр-çумĕсем вĕт эсир?

Хĕрсем
(*именсе*).

Нарспипеле вăйăран
Пĕрлех килтĕмĕр эпир.

Карчăк

Ай, тамаша, тамаша...

Пĕчĕк ачасем чупса кĕреççĕ. Вĕсем пĕринчен тепри ирттерсе кăшкăраççĕ.

Ачасем

Тытнă!... Тытнă!... Килеççĕ!..

Михетер
(*урамалла май утса*).

А-а, йытă чунĕсем,
Ыр пулмасса сисеççĕ...
Пуçăрсене усрăр-им!

Куштан каччă, Хăйматлăх тата тепĕр пуса-каччи Нарспипе Сетнере илсе кĕреççĕ. Сетнерĕн аллине хыçалалла туртса çыхнă. Картишне пур енчен те çынсем килсе тулаççĕ.

Карчăк
(*Нарспие çӳçрен ярса илет*).

Ы-ых, путсĕр арçури,
Пире намăс кăтартма!

Михетер
(*Сетнере пырса ҫапать*).

Йӑраланчӑк ҫӗр хурчӗ,
Хӗре вӑрласа тарма!

(*Пӗр каччӑран саламат илсе хӗнет.*)

Нарспи

Ан тив, атте, Сетнере...

Карчӑк
(*лӑскаса*).

Ха, ҫӗрҫӑтман пуҫна,
Ҫаплах илме пӗлместӗн
Сетнер ҫинчен ху куҫна!

(*Нарспие тӗккелесе, сӗтӗркелесе пӳртелле илсе кӗрет.*)

Нарспи

Эй, аннеҫӗм, аннеҫӗм,
Мана ҫӳҫрен ан сӗтӗр,
Мана апла вӗрентсе
Манран ырӑ ан кӗтӗр.

Сетнер

Ҫитӗ ӗнтӗ, Михетер
Хӗненипе усси ҫук.

Эсĕ мана хĕнесе
Чура чунлă тăвас çук!

Çынсем хушшинчен Сетнер амăшĕ килсе тухать те Сетнер патнелле ыткăнать.

Сетнер амăшĕ

Ах, Михетер, тархасшăн
Каçар ăна, ан хĕне...

Михетер
(*Сетнере тĕксе ярать*).

Тасал ман куç умĕнчен,
Ан курăн тек ĕмĕрне!
(*Сетнер ӳкес пек тайкаланать, ăна амăшĕ пырса тытать те çавăтса тухса каять.*)

Михетер

Çитĕ сире, туй халăх,
Куçа-пуçа чалăртма!
Ку мыскара пулнине
Ан тăрăшăр палăртма.
Айтăр сĕтел патнелле,
Пуçлас туя çĕнĕрен.
Ташлăр, юрлăр хытăрах
Арçын туйĕ киличчен.

Туй халăхĕ шавлама пуçлать. Шăпăр сасси. Урамра арçын туйĕ çĕр-çĕмĕрсе юрласа килни илтĕнет,

часах вăл Михетер хапхи умнĕ килсе çитет. Çутă сÿнет, кăшт тăрсан татах çутăлать.

Пусма çинчен пуçласа кĕлет патне çитиччене хĕр туйĕ енчи халăх тăрать, вĕсене хирĕç—пĕр вĕçĕ пусма умĕнче, тепĕр вĕçĕ урамра—арçын туйĕ. Арçын туйĕ умĕнче Мăн кĕрÿ, Тăхтаман тата Кĕçĕн кĕрÿ тăраççĕ.

### Мăн кĕрÿ

(*такмак калать, аллинче тав курки*).

Салам-аликкĕм, тав-сие!
Ĕçетре-çиетре, вылятра-кулатра,
Пире хапăл тăватра?
Хапăл тусан, малалла иртĕпĕр,
Хапăл тумасан, каялла кайăпăр.

### Хăйматлăх

Хапăл тăватпăр, хапăл тăватпăр.

### Каччă туйĕ

(*юрласа*).

Хай-хай! Хай-хай!
Хай-хай! Хай-хай!

### Мăн кĕрÿ

Пĕлтĕрхинчен аван-и,
Кăçалхинчен чипер-и?
Сире асăнни çичĕ кун,
Çула тухни виçĕ кун,

Асănнă кун тухаймарăмăр,
Тухнă кун çитеймерĕмĕр:
Утсем ырхан пулчĕç,
Çулсем начар пулчĕç,
Айăп ан тăвăр, хăта!

Х ă й м а т л ă х

Пиртен пулсан—айăп çук!

К а ч ч ă т у й ĕ

Хай-хай! Хай-хай!
Хай-хай! Хай-хай!

М ă н к ĕ р ў

Çитмĕл те çичĕ тинĕс утипе,
Утмăл çухрăм сĕм вăрман хушшипе,
Çитмĕл çухрăм çеçен хир варрипе
Килтĕмĕр эпир сирĕн пата.
Сĕм вăрман урлă каçнă чух
Утмăл та ултă упа куртăмăр,
Çеçен-хир урлă каçнă чух
Калама çук чаплă кĕпер куртăмăр:
Юписем çав кĕперĕн чугун,
Хăмисем çав кĕперĕн кĕмĕл,
Карлăкĕ çав кĕперĕн ылттăн,
Ик аяккинче икçĕр улмуççи,
Пурте çитмĕл çичшер туратлă.
Çулçисем çупаççĕ, улми ташлать

Сар кайăкĕ юрă юрлать—
Çав кĕперпе касса килтĕмĕр.
Çӳлтен вĕçекен—турат çинче,
Çĕртен утакан—çĕр çинче,
Эпир хамăр çĕртен çӳрекенсем,
Çаранлăха ларса кантăмăр:
Утсем çаран ути çирĕçĕ,
Хамăр çаран сырли çирĕмĕр.
Мухмăрларĕç пирĕн ачасем
Алса пӳрнески пек сырласем çисе.
Çаранлăхра пулчĕ çавра кӳл,
Çавра кӳл варринче ылттăн юпа,
Ылттăн юпа çинче ылттăн кăвакал,
Çунаттине çапса нартлатать,
Кӳлĕ шывне хыттăн хумхатать,
Кӳлĕ шывĕ лайăх шыв пулчĕ,
Тăрна куç пек тăрă шыв пулчĕ—
Çав шывпа утсене шăварса
Килтĕмĕр вырăнтан хускалса.
Хушăлка пуянĕ авланать,
Силпи пуянĕ хĕр парать,
Çавсен тивлечĕпе çӳретпĕр.
Эй, хăтасем, тăхлачăсем!
Чăн-и, суя-и çак сăмахсем?

Хăйматлăх

Чăн, чăн, ырă хăтасем!

### Каччă туйĕ

Хай-хай! Хай-хай!
Хай-хай! Хай-хай!

### Мăн кĕрӳ

Силпи ялне çитесси
Çичĕ çухрăм юлнăччĕ,
Çак хăтасен кил-çурчĕ
Хула пекех курăнчĕ.
Патне çитсен пăхрăм та,
Ниçтан кĕме пĕлмерĕм.
Такмакăма каласан—
Хапхи хăех уçăлчĕ.
Çакă ырă хăтасен
Аслă сат-пахчийĕ пур,
Сат-пахчинче мунчи пур,
Чулĕ мерчен тет иккен,
Милки пурçăн тет иккен,
Ăшши шерпет тет иккен,
Çăвăннă чух шывпа мар,
Сĕтпе çăвас тет иккен.
Çав мунчара çăвăнма
Пире ирĕк пулмĕ-ши?
Эп ыйтмастăп, кĕрĕвĕр ыйтать.

### Хăйматлăх

Пиртен пулсан—чару çук.

Каччă туйĕ

Хай-хай! Хай-хай!
Хай-хай! Хай-хай!

Мăн кĕрӳ.

Çак хăтанăн килхушши
Утмăл хăлаç урлăшĕ,
Сакăрвун хăлаç сарлакăш,
Тăхăрвун хăлаç тăрăшшĕ.
Сакăрвун хăлаçра сакăрвун юпа,
Сакăрвун юпара сакăрвунă ункă.
Сакăрвун ункăран пĕр ункине
Пирĕн йĕс таканлă утсене
Кăкармашкăн ирĕк пулмĕ-ши?
Эп ыйтмастăп, кĕрĕвĕр ыйтать.

Хăйматлăх

Пиртен пулсан—чару çук.

Каччă туйĕ

Хай-хай! Хай-хай!
Хай-хай! Хай-хай!

Мăн кĕрӳ

Çак хăтанăн чаплă пӳрчĕ пур:
Тултан пăхсан сакăр кĕтеслĕ,
Шалтан пăхсан тватă кĕтеслĕ,
Пӳрчĕн ăшĕ-чиккине

Куçпа виçсе илеймĕн,—
Сакăрвунă сакăр сакки пур,
Сакăр ураллă сĕтелли пур,
Сакăр ураллă сĕтелли çинче
Хĕрĕх кăшăллă пички пур:
Пички икĕ пăкăллă:
Пĕр пăккинчен сим юхать,
Тепĕр пăккинчен пыл юхать,
Пичке тавра сар хĕрсем
Юрла-юрла çўреççĕ.
Çав пичкери сим-пыла
Пире ĕçме пулмĕ-ши?

Хăйматлăх

Пиртен пулсан—чару çук.

Каччă туйĕ

Хай-хай! Хай-хай!
Хай-хай! Хай-хай!

Мăн кĕрў

Ырă ут такăнмасăр юртмасть,
Ырă çын йăнăшмасăр пулмасть,
Ўт чĕлхенĕн шăмми çук,
Чăн сăмахăн суйи çук.
Кунтан ытла сăмахăм çук,
Сиртен ытла çыннăм çук.
Çитменнине çитерĕр,

Ытлашшине каçарăр.
Тайма пуçăм сирĕн умăрта;
Тав сире, хăта тăхлачăсем!
(*Алăри куркине ĕçсе парать.*)

### Каччă туйĕ

(*юрласа ярать, шăпăрçă шăпăр калать*).

Хăта пире хваттер яр,
Хваттер яр та хĕрне пар.
Хĕрĕ пултăр тӳшеклĕ,
Тӳшекки пултăр çиттиллĕ,
Çитти пултăр çӳçеллĕ,
Çӳçи пултăр шăрçаллă,
Шăрçи пултăр тенкĕллĕ,
Тенки пултăр патшаллă,
Патши пултăр майраллă,
Майри пултăр, сарă пултăр,
Куçран пăхсан йăл култăр.

### Хĕр туйĕ

Кĕске çаран утине
Кăçал çулас теменччĕ,
Шăпи тухрĕ, мĕн тăвас?
Аппаçăмах Нарспи пур,
Кăçал парас теменччĕ,
Çырни тухрĕ, мĕн тавас?

### Каччă туйĕ

Атте лаши тур лаша,
Шурăмпуçпе кĕçенет.
Пирĕн пичче, сар пичче,
Шурăмпуçпе вăранать,
Вырăн пур та мăшăр çук, —
Мăшăр илме килтĕмĕр.

Хир-хир урлă килтĕмĕр,
Хĕрлĕ питлĕ хĕр илме.
Ял-ял урлă килтĕмĕр,
Ялта ятлă хĕр илме.
Вăрман урлă килтĕмĕр,
Вăрăм пӳллĕ хĕр илме.

### Хĕр туйĕ

Пахча-пахча, ай, чĕкĕнтĕр,
Чаваласа кăларăр.
Каччă енчи туй халăхне
Хăваласа кăларăр.

### Каччă туйĕ

Çупкăм кăна çупкăм, ай, çĕр çырли,
Пирĕн пичче татса çиесшĕн.
Ушкăн кăна ушкăн, ай, сарă хĕр,
Пирĕн пичче кĕрсе вылясшăн.

Пирĕнех те лаша, ай, мĕн ыйтать?
Чĕресех те тулли сĕл ыйтать.

Чĕресех те тулли, ай, пулмасан,
Тапайса сирпĕтсе ярăп, тет.

Чĕресех те тулли, ай, пулсассăн,
Кукалесе çисе ярăп, тет.
Пирĕнех те пичче, ай, мĕн ыйтать?
Ытамах та тулли хĕр ыйтать.

Ытамах та тулли, ай, пулмасан,
Çĕр чиккине пăрахса хăварăп, тет.
Ытамах та тулли, ай, пулсассăн,
Ыталаса илсе кайăп, тет.

## Хĕр туйĕ

Ылттăн укçа памасан,
Тыттармастпăр аппана.
Кĕмĕл укça памасан,
Кăтартмастпăр аппана.
Пăхăр укçа памасан,
Пăхтармастпăр аппана.

Тăхтаман хĕрсене ывçипех укçа сапса парать. Вара Мăн кĕрӳ, Тăхтаман, Кĕçĕн кĕрӳ тата ватăрах çынсем пӳрте кĕрсе каяççĕ.

## Хĕр туйĕ

Уç-ха, инке, пахчуна,
Купăста пуçне курар-ха.
Хыв-ха, йысна, çĕлĕкне,
Кукша пуçна курар-ха.

Пăхăр халĕ йыснана,
Пуçĕ епле çĕрелле,
Çĕр чавакан сысна пек,
Сысна тесен — шăрчĕ çук,
Этем тесен—сăнĕ çук,
Йытă тесен—хӳри çук.

Ĕçкĕ-çикĕ пуçланать. Туй сикет: каччă туйĕпе хĕр туйĕ тавлашса юрланă хушăрах, параппан çапса, шăпăр каласа, алă çупса, сике-сике ташлаççĕ.

ЧАРША

## ВИÇÇĔМĔШ АКТ

### 1-мĕш картина

Пуян чăваш пÿрчĕ. Сылтăмра, алăкран кĕрсенех кăмака. Сулахай енче икĕ чÿрече. Тĕпелте юман сĕтел ларать, тенкелсем, пукансем т. ыт. те. Уçă чÿречерен хĕвел пайăрки сăрхăнса кĕрет. Пÿрт умĕнчи йывăççем çинче кайăксем юрлани илтĕнет.

Нарспи хуран çуса пĕтерет те, аллине çуса кĕпе çĕлеме ларать.

Нарспи

Эх, хĕрарăм пурнăçĕ...
Апат пĕçер, хуран çу,
Шыв патне кай, ĕне су...
Кунĕн-çĕрĕн патак çи...

Патак çине утланса лашалла выляса чипер ача Сентти килсе кĕрет.

Сентти

Инке, инке, асту-ха,
Лаши епле маттур ман.
(*Сиксе илет.*)

Нарспи

Ху пекех çав, лаши те,
Хытă чупать пулмалла.

Сентти

Ийя. Эпир Энтипе
Выляс тетпĕр лашалла.
Эс вăрçмастни, инкеçĕм?

Нарспи
(*ăна ачашласа*).

Каях, вылях, пепкеçĕм,
Чипер çÿре урамра.

Сентти

Юрĕ.

Ача сасси

Сентти, хăвăртрах!

Сентти

Халех, Энти, тухатăп!
(*Хăвăрт тухса каять.*)

### Нарспи

*(Кĕпе çĕлет, ларсан-ларсан ун алли усăнать. Алăк еннелле пăхса ассăн сывласа илет).*

Çакă çутă тĕнчере
Пурте Сентти пек пулсан,
Пурăнма та ун чухне
Пулĕччĕ-ха пит аван.
Çавтер ырă ачана
Турă чунне панă çав,
Кулса сиксе вылямА
Кайăк чунĕ янă çав.
Вăл, улăхри лĕпĕш пек,
Вĕлтĕртетсе çеç çӳрет.
Çынсем пурте Сентти пек,
Ирттерсенччĕ ĕмĕре?..
Пурте ырă та йăваш
Пулсан, ун чух çĕр çинче
Мăшкăл, асап пулмĕччĕ,
Куççулĕ те юхмĕччĕ...
Тăван атте-аннеçĕм
Пуян пулман пулсассăн,
Вĕсен вата чĕрисем
Хытса ларман пулсассăн,
Эпĕ те çак кил-çурта
Килес çукчĕ нихăçан.
Ак халь ĕнтĕ ман пуçа
Çиет усал Тăхтаман.

Епле чӑтса пурӑнас,
Кама калас хуйхӑма?
Кам хӗрхенӗ, йӑпатӗ
Манӑн мӗскӗн чунӑма?
Эп мӗн асап тӳснине,
Сетнер, эсӗ пӗлсенччӗ,
Хӑвӑн мӗскӗн Нарспине
Хӑтармашкӑн килсенччӗ...
Анчах... эпӗ чӗннине
Халь тин эс те илтеймӗн:
Хушӑлкара макӑрни
Силпи таран ҫитеймӗ.

(*Пауза.*)

Мӗнпурӗ те пӗр кун ҫеҫ
Курӑттӑмччӗ пурӑнса...
Ҫумра Сетнер пултӑрччӗ...
Хуйха-суйха йӑлт манса
Юратӑттӑм эп ӑна,
Ачашлӑттӑм мӗскӗне...

(*Хытӑ кулянса.*)

Ҫук ҫав ӗнтӗ... иртрӗ пуль
Сетнерпеле пурнасси...
Пӗтрӗ ырӑ курасси...

(*Пуҫне усать.*)

Тӑхтаман мунчала йӑтса кӗрет те, алӑк патӗнчи ҫеклӗрен ҫаклатса кантӑра явма пуҫлать.

## Тăхтаман

Ĕçсĕр аптăрарăн-им,
Пуçна усса ларатăн?
Хĕрсе ĕçлес вăхăта
Ахаль сая яратăн.
Мĕн нăйкăшан, йĕрĕх пек,
Кунĕпе те çĕрĕпе?
Çийĕ-пуçу япăх-и,
Е хырăму выçă-и?
Ай, упăшку ватăран
Ўпкелешсе макăран?
(*Шăл йĕрсе.*)
Çук, чиперккем, ан макăр,
Унщăн пулсан — кăлăхах.
Эп ватăлса лариччен
Хĕвел сўнсе ларĕ-ха.
Ăс çитмест сан, хĕрарăм,
Чипер упăшкасене
Çапла кĕтсе илеççим?
Асту-ха эс çынсене?
Кил-çурт хуçи çумĕнче
Ачашланаççĕ вĕсем,
Упăшкисем умĕнче
Кулсах тăраç куçĕсем.
Кала хирĕç тавăрса,
Эсĕ мĕнле хăтланан?..
Сана хам арăм туса
Сахал укçа тухни ман?!

*(Нарспи чӗнмест, шӑппӑн-шӑппӑн ӗсӗклеме пуҫлать.)*

Мӗн каларӑм, илтетни?
Эппин каллех чӗнместӗн?
Юрӗ... Каллех ӗнерхи
Кучченеҫе кӗтетӗн?..

*(Ҫеклӗрен кантрине вӗҫертсе илет. Нарспи патнелле йӗрӗнчӗклӗн кулкаласа ҫывхарать.)*

Нарспи

Мӗншӗн хӗнен, Тӑхтаман,
Мӗскер турӑм эп сана?

Тӑхтаман

Э-э, чӗлхӳ салтӑнчим?
Вӗрентӗп-ха, аванах...

Нарспи

Чунсӑр ан пул, Тӑхтаман,
Киле ярсам эс мана...
Пурпӗр пурнас ҫук эпир.
Мӗне кирлӗ эп сана?

Тӑхтаман

Кирли-кирлӗ маррине
Санран ыйтсах тӑмӑпӑр:
Авалхисен йӑлине

Пăсма ирĕк памăпăр.
Асту, Нарспи, йĕвену
Ман алăра малашне!..
(*Пауза. Аллине çума тăрать. Шыв çуккине курса.*)
Мĕн ку? Мĕне пĕлтерет?
Мĕншĕн шыв çук витрере!?.
(*Нарспи пушă витресем илсе тухса кайма тăрать.*)
Тăхта, асту, çăл панче
Ан якăлтат яшсемпе.
(*Нарспи каять.*)
Пулать иккен хĕрарăм, —
Чăхăмлакан лаша пек.
Хăйĕн ырă мăшăрне
Хисеплеме пĕлмест çав.
Хĕрарăмăн çÿç вăрăм,
Ăсĕ кĕске теççĕ çав.
Э-э, пирĕн алăсем
Тыткалама пуçласан,
Хытнă сарă сăран та
Икерчĕ пек пулакан...
(*Элекçĕ хĕрарăм кĕрет.*)

Элекçĕ хĕрарăм

Пирĕн килес, вăй патăр,
Хисеплĕ Тăхтамана.

Тăхтаман

(*кăмăлсăртараххăн*).

Килех. Темĕн палласа
Илеймерĕм эп сана.

Элекçĕ хĕрарăм

Ара, ăçтан пурне ге
Астăвас-ха тĕнчере?
Анчах сирĕн ырлăха
Манмаççĕ-ха Силпире.
Туй чух пуян Тăхтаман
Ылттăн-кĕмĕл укçине
Сарă хĕрсем çинелле
Сапрĕ, теççĕ, ывçипех.

Тăхтаман

(*çемçелсе*).

Эппин эсĕ Силпирен
Пултăн пулать, тăхлачă?
(*Пукан лартса парать.*)

Элекçĕ хĕрарăм

(*ларса*).

Çапла. Сире Михетер
Салам каласа ячĕ.

Тăхтаман

Тавах, тавах, тăванăм,
Ырă хыпар кӳнĕшĕн.

Элекçĕ хĕрарăм

Уншăн тем пек хаклă вĕт
Хĕрĕпелен кĕрӳшĕ.

Тăхтаман

Сывлăхĕсем мĕнлерех?
Мĕн шавлаççĕ ял çинче?

Элекçĕ хĕрарăм

Сывлăхĕсем чиперех.
Хула пек кил-çуртĕнче
Карчăкĕпе иккĕш те
Улпутсем пек çӳреççĕ...
(*Чееленсе.*)
Хăйсем вилсен, пурлăхне
Сире пехиллес теççĕ.

Тăхтаман

Кама пехиллес тата?
Тахăмĕ те—Нарспи çеç.

Элекҫӗ хӗрарӑм
(*шӑл-йӗрсе*).

Хӑшсем сана Нарспие
Мулшӑн качча илнӗ, теҫ.

Тӑхтаман
(*кӑмӑлсӑрланса*).

Мулшӑн! Тупнӑ палкама!
Сӑмах ҫукран аптранӑ.
Михетере хӗрешӗн
Хулӑм укҫи кам панӑ?
Ҫур пурлӑха Нарспишӗн
Патӑм эп Михетере.

Элекҫӗ хӗрарӑм

Пӗр шутласан, Нарспишӗн
Ун чул укҫа шелтерех...

Тӑхтаман

Ӑмм...

Нарспи шыв ӑсса кӗрет те витрисене лартса хуран илме тӑрать.

Элекҫӗ хӗрарӑм

Нарспи-ҫке ку... Сывӑ-и?

Нарспи
(*салхулăн*).

Сывă-ха.
(*Алă тытать.*)

Тăхтаман

Чуп нўхрепе,
Кайса сăра ăсса тух.
Кăмăллăрах пуласчĕ
Киле хăна килнĕ чух.
(*Нарспи чăм илсе тухса каять.*)

Элекçĕ хĕрарăм
(*çатăртатса*).

Ха, япала, асту-ха,
Ял çынне те палламасть.
Мăнаçлансах кайнă-çке!
Сетнерпелен вăрмана
Туй кас тарса кайнине
Ытла хăвăрт маннă-çке.

Тăхтаман
(*сасартăк кăлт сикет*).

Мĕн? Мĕн терĕн?

Элекçĕ хĕрарăм

Намăссăр!..

Тăхтаман

Кам намăссăр? Эпĕ-и?

Элекçĕ хĕрарăм
(*пăшăлтатса*).

Асту, кĕрӳ, ан шарла,
Темĕн курса ларас мар:
Ятлас-тăвас пулсан та,
Тухса каймa ирĕк пар...

Тăхтаман
(*тӳсеймесĕр*).

Кала часрах, мĕн тата
Ахаль тăсан вăхăта?!

Элекçĕ хĕрарăм

Ара, Нарспи Сетнерпе—
Хăйĕн савнă тусĕпе—
Туйне лартнă каçхине
Вăрттăн тарса кайнине
Ху та илтнĕ пуль те-ха?..

Тăхтаман

Кун пек усал сăмаха
Илтессинчен—илтменни...
Кам вăл леш, Сетнер тени?

Элекçĕ хĕрарăм

Пуçтах этем, йĕрки çук.
Хушăлкана килнĕ чух
Ял вĕçĕнче, Тукасра,
Пĕчĕкçеççĕ пӳрт ларать.
Амăшĕпе çав пӳртре
Сетнер тени пурăнать.

Тăхтаман
(*айккинелле*).

Акă хайхин сăлтавĕ!
Манман эп туй кĕлетне...
(*Хĕрарăма.*)
Хĕрарăмсен ултавĕ
Асап кӳрет хăйсенех.

Элекçĕ хĕрарăм

Кирлех, кирлех, кĕрӳçĕм,
Кун пек ĕçшĕн ан каçар.
Анчах, халех ан хăтлан,
Мана кайма вăхăт пар!

Нарспи сăра ăсса кĕрет. Тăхтаман каллĕ-маллĕ уткалама тытăнать.

Тăхтаман

Хăнана ĕçтериччен—
Ăшăт пăртак сăруна,

Нарспи

Лаçра, вучах çунать те,
Ăшăтсах кĕтĕм ăна.

Элексĕ хĕрарăм

Э-э, ара, пырĕччĕ,
Кирлĕ марччĕ чăрманма.
Хĕрарăмăн пырĕнче
Чул пултарать шăранма.

Нарспи
(*алтăрпа сăра тултарса хĕрарăма тыттарать*).

Пайтахранпа Силпирен
Хăна-тавраш пулманччĕ.

Элексĕ хĕрарăм
(*алтăра пĕр сывламасăр ĕçсе ярать*).

А-ах, сăри техĕмлĕ,
Пыр тĕпне уçсах ячĕ.
Тавах, хĕрĕм, ĕрехмет.
Хамăр тахçан ĕçтерес.

Нарспи
(*каллех алтăра тултарать*).

Ĕçтересси пулĕ-çке...
(*Алтăра тыттарать*).

Э л е к ç ĕ  х ĕ р а р ă м

Кĕрӳве те ĕçтер эс.

Т ă х т а м а н

(*сиввĕн пăхса*).

Ĕç!

Э л е к ç ĕ  х ĕ р а р ă м

(*шикленерех*).

Э... эппин ĕçем-и?

(*Ĕçет.*)

Т ă х т а м а н

Кӳр, хам парам тултарса.
Ĕçер пĕрре иксĕмĕр
Хире-хирĕç шаклатса.

(*Икĕ алтăр тултарать*).

Э л е к ç ĕ  х ĕ р а р ă м

Капла, ара, турçăмах,
Мĕн пулĕ ман хырăма?

Т ă х т а м а н

(*алтăрĕпе шаклатса.*)

Ну, ĕçнисене тавсие!

(*Алтăра ĕçсе ӳпĕнтерет, хĕрарăм кана-кана ĕçет.*)

Ĕç, ĕç тавай! Тĕппипе!

Элекçĕ хĕрарăм
(*пĕрре Тăхтаман çине, тепре Нарспи çине пăхса илет те ĕçет*).

Ўсĕрĕлсех кайрăм-çке.
Тавах ĕнтĕ кунпекех
Ыр кăмăллă пулнăшăн, —
Çул май анчах кĕрсен те,
Чаплă хăна тунăшăн.
Ĕнтĕ халĕ майĕпен
Уттарам-ха киле май.

(*Кайма тăрать.*)

Тăхтаман

Ăсат, Нарспи, хăнана!

Элекçĕ хĕрарăм

Сыв пулăр-ха.

Тăхтаман

Чипер кай!

Нарспи хăнине ăсатма тухать. Тăхтаман сăра тултара-тултара ĕçет.

Тăхтаман

Ята çĕртрĕ, намăссăр,
Ав, мĕскер хăтланнă вăл!..

Пĕтĕм ăшăм-чиккĕме
Ярса илчĕ çил-тăвăл...
Аллă çула çитиччен
Авланмасăр пурăнтăм.
Хĕвел тухса аничченех
Ялан ĕç панче пултăм.
Атте-анне пурлăхне
Кунĕн-çĕрĕн ӳстертĕм.
Тарçă-тĕрçĕ таврашне
Хĕскĕчĕ пек хĕстертĕм.
Пĕр пус çумне çур пуса
Хушса пырса пуйрăм эп.
Анчах халĕ... тур çырлах!
Мĕскер курса лартăм эп?!

(*Нарспи кĕрет.*)

Ак, ман пуçа çиекен,
Ыр ятăма çĕртекен!

(*Пăтаран саламатне вĕçертсе илет.*)

Кил-ха, усал, кунтарах...
Эсĕ апла хĕр иккен!
Эсĕ апла Сетнерпе
Тарнă мĕн-ха вăрмана
Туйăна тунă çĕртенех!

(*Нарспие çавăрса тытса саламатпа хĕнет, çапмассерен сăмах калать.*)

Акă сана, ак сана!..
Йыхăр ĕнтĕ Сетнерне,

Çылăхĕнчен хăтартăр
Хăйĕн юратнă хĕрне.
Упăшкаран кулма-и?
Ы-ых, сана, сана-и?!

(*Хĕнет-хĕнет те тулалла вăркăнса тухса каять, Нарспи урайне выртса юлать. Нимĕн те чĕнмест вăл. Чылайран шăппăн ĕсĕклеме пуçлать, унтан хытăрах, хытăрах. Çав вăхăтра чипер ача Сентти лашалла выляса кĕрет.*)

Сентти

Инке, инке...

Нарспи

Ах, Сентти...

Сентти

Ан йĕр, инкем, ан йĕрсем,
Тутăрупа шăл куçна.
Ан хуйхăрсам, инкеçĕм,
Хăваласам хуйхăна.

Нарспи

Сентти, пепкем, чĕппĕмçĕм...
Пурнаймастăп эп кунта...

Сентти

Ма?

Нарспи

Пӗлейместӗн ҫав-ха эс.
Пӗчӗк чухне эп хам та
Сан пекехчӗ, пепкеҫӗм,
Ӑнланмастӑм нимӗн те,
Савӑнма ҫеҫ пӗлеттӗм,
Пӑр-пӑр вӗҫен кайӑк пек,
Выляса ҫеҫ ҫӳреттӗм,
Ҫӳлӗ валак патӗнче
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхни,
Ватӑ йӑмра ҫийӗнче
Пӗчӗк шӑпчӑк юрлани
Ача чухне анчах ҫав
Илемлетнӗ пурнӑҫа.

(*Хуллен макӑрать.*)

Сентти

Ан йӗр, инке... Сан валли
Чечек татса килем-и?

Нарспи

Эй, апӑрша... Ачалӑх —
Чӑнах пурнӑҫ илемӗ!..

С е н т т и

Хитре чечексем татса
Пуçкăшăлĕ тăватăп,
Вара ăна, инкеçĕм,
Сана савса паратăп.

Н а р с п и

Юрĕ, юрĕ, ту, ачам...
(*Ачашлать.*)

Савнăçăм та эс анчах.
Сана курса калаçсан,
Чĕрем лăштах пулать ман.

С е н т т и

Текех ан йĕр вара эс,
Эпĕ халех килетĕп.
(*Чупса тухса каять.*)

Н а р с п и
(*çӳç-пуçне тирпейлет*).

Сетнер, тусăм, эп каллех
Сана аса илетĕп...

Т ă х т а м а н
(*кĕрсе алăк умне тăрать*).

Ну, епле пек, чиперккем,
Чуну канчĕ пек-и? Ай
Сахал пулчĕ пек-и-ха?

Нарспи

(*сасартăк*).

Путсĕр эсĕ! Кайӑ! Ка-а-йӑ!..

(*Хыттăн ĕсĕклесе макăрса ярать.*)

ЧАРШАВ.

## 2-мĕш картина

Сцена çавах. Нарспи пуçне чиксе хурланса ларать. Каç пулса килнĕ вăхăт. Тулта аван, тӳлек çанталăк. Инçетре юрăсем илтĕнсе каяççĕ.

Нарспи

Хĕрсем юрла пуçларĕç...
Каç пуласси инçе мар.
Часах вăйя пуçтарнĕç...
Эс пур — пĕрмай пӳртре лар.
Хĕр чух эп те сирĕн пек
Вăйя тухнă каççерен...
Вăйă хыççăн Сетнерпе
Çӳреттĕмĕр çеремре...

(*Пауза.*)

Шăпчăк пуçлать юррине,
Уйăх çӳле хăпарать...
Эпир çаплах пĕр-пĕрне
Асататтăмăр вара.
Пĕрре... тул çутăлнă чух

Тин таврӑнтӑм эп киле.
Савнӑҫлӑ хам, телейлӗ,
Юрлас, йӑпанас килет...
Пирӗн хӗрӳ юрату
Кӗленче пек тасаччӗ.
Пурнӑҫ тени этемшӗн
Ялан ҫапла пулсанччӗ!..

(*Инҫетре-инҫетре хӗрсем юрлаҫҫӗ, вӑл ерипен аяккалла кайса шӑпланать.*)

Ман юрласси, куласси
Ӗмӗрлӗхех иртрӗ ҫав.
Атте-анне ухмаххи
Сая ячӗ пурнӑҫа.

(*Пауза.*)

Арӑм пултӑм ирӗксӗр
Атте-анне хушнипе.
Анчах хӗрӗр, мӗскӗнӗр,
Ырӑ курмасть каччипе.
Хӗрхенмесӗр хӗрӗре
Ҫичӗ ютӑн аллине,
Ҫичӗ юта, ют ҫӗре
Парса ятӑр, мӗскӗне.
Халӗ хӗрӗр, мӗскӗнӗр,
Асап курса пурӑнать.
Ӑна вата упӑшки
Йытӑ вырӑнне хурать.
Мӗншӗн мана савнинчен

Çаплах ятăр уйăрса?
Мĕншĕн кунта киличчĕн
Çимерĕм-ши хам пуçа?
Мĕншĕн хаяр тăшманпа
Ман пĕр çуртра пурăнас?
Пĕтес мар-ши пуçăмпа?
Епле тӳссе пурăнас?!

(*Пауза.*)

Анчах, манăн савни пур—
Çăлаймĕ-ши вăл мана?
Унăн вăйлă аллисем
Пĕтермĕç-ши тăшмана?
Çук, пуçăма çийиччен
Тăшманăма пĕтерем!—
Хĕнхур, асап тӳсиччен
Тăхтамана... вĕлерем!

(*Хăй шухăшĕнчен хăй хăраса сиксе тăрать. Пăшăлтатса.*)

Анчах, вăйăм çитĕ-ши?
Епле кунтан çăлăнас?!

(*Урайне чĕркуçленсе ларать.*)

Эй, пӳлĕхçĕм, пулăшсам!..
Чунăм çунать, мĕн тăвас?...

(*Урайне тăсăлса ӳкет те ĕсĕклесе макăрса ярать, часах вăл нăшлатни çеç илтĕнет.*)

Тултан Сентти лашалла выляса, ахăрса кĕрет, пуçне чечек кăшăлĕ тăхăннă.

Сентти

(*Нарспие урипе кăлт тапса илет. Нарспи хускалмасть.*)

Инке, инке! Тăрсамччĕ.
Мĕншĕн çĕртех çыврăран?
Пăхсам, акă, сан валли
Чечек татрăм çаранран,
Пуçкăшăлĕ турăм эп.
Тăрсам ĕнтĕ... Инке теп?..

Нарспи чĕнмест, Сентти вэра пуç кăшăльне ун пуçне тăхăнтарать те, патакне сĕтĕрсе тулалла чупса тухса каять. Нарспи вăл кайсанах хăвăрт тăрать, пуç-кăшăлĕ çĕре ӳкет, вăл ăна асăрхамасть. Ун-кун пăх-каласа илет, хатĕрлесе хунă хуранне çакса вут чĕртсе ярать, хĕвĕнчен пĕчĕкçеç кĕленче кăларса хурана нар-кăмăш ярать.

Нарспи

(*пăшăлтатса*).

Пĕтсен пĕтем, пĕт, тăшман!
Пурăнăçăм ырах мар.
Наркăмăшăм, эс паян
Хăвăн ĕçне туса пар!..

Вучах ялкăшать. Нарспи хăвăрт тула тухса каять. Пĕр вăхăта пӳртре шăпах, кăвайтă шатăртатса çунни çеç илтĕнет. Кăшт тăрсан Нарспи хăвăрт вут-шанкă

çĕклесе кĕрсе хуран айне хурать. Çăпала илсе хуранне пăтрататать. Ун-кун пăхкаласа илет, вĕрет, сурать.

Çитмĕл тинĕс леш енчен
Килет карчăк Шапатан,
Вĕр, сур, карчăк, яшкана—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Утмăл тинĕс уттинче
Ларать, сикет йĕс пукан,
Сикех, сикех, йĕс пукан,—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Вăтăр та пĕр ту çинче
Йĕс хуранра пиç, яшка.
Çав яшкара пиç, çĕлен,
Пиç тамăкра, упăшка!

Çав вăхăтра тулта Тăхтаман „тпру"! — тенĕ сасă илтĕнсе каять. Нарспи „ах"! тесе хуран панчен сиксе ўкет, пĕр вырăнта юпа пек хытса итлесе тăрать, часах хăйне хăй çирĕплетет, шăпăр тытса урай шăлма пуçлать. Вара Тăхтаман килсе кĕрет. Хуралса пĕтнĕ вăл. Кĕрсенех чўлмекрен шыв ăсса пит-куçне çума тăрать.

Т ă х т а м а н
(*хаяррăн*).

Нарспи!
(*Нарспи чĕнмест.*)
Кама калатăп?
Шыв ярса тăр ал çине!

(*Нарспи ун алли çине шыв ярса тăрать, хăйĕн аллисем чĕтреççĕ.*)
Чипертерех яркала!
Ма тăкатăн урайне?!
(*Çăвăнса пĕтерчĕ, шăлăнать.*)
Пăркаланса çӳрен те,
Апат хатĕр-и-ха сан?

Нарспи

Хальччен пиçрĕ пуль ĕнтĕ...
Памалла-и антарса?

Тăхтаман

Мĕнле пек сан шухăшпа?
Хирте суха тăвакан
Çиет пек-и таврăнсан,
Е пурăнать сывлăшпах?
(*Нарспи чĕнмест. Сĕтел çине хатĕрлесе яшка антарать.*)
Ма чĕнместĕн? Чĕлхӳне
Йытта çиме патăн-им?
Упăшка-и эп сана?...
Паçăрхине мантăн-им?
(*Нарспи сĕтел çине яшка лартать. Тăхтаман кашăк илсе çиме ларать.*)
Кашăкна ма çумастăн?
(*Нарспи кашăк çуса парать.*)
Ĕмĕтленни пулмарĕ,

Суйрĕ евчĕ, çĕрçăтман,
Ĕçчен, тесе мухтарĕ...
(*Кĕлтуса çиме пуçлать.*)
Яшка тутлă-çке паян.
(*Нарспи чĕнменрен, тарăхса.*)
Яшка тутлă, çи ларса!

Нарспи

Çийĕп-çке-ха, кайран та.
Пит çиессĕм килмест ман.
(*Тăхтаман çиет. Нарспи тўсеймест, тухса кайма тăрать.*)

Тăхтаман

Ăçта, капла васкасах?

Нарспи

Ене сăвас терĕм те...

Тăхтаман

Ну, ну, эппин хăвăртрах!
(*Нарспи тухса каять. Тăхтаман çаплах çисе ларать-ха. Çисен-çисен тăрса шыв ĕçет, каллех ларса çиет.*)
Ăшăм хыпса çитрĕ тем...
(*Çисе тăрать те сĕтел хушшинчен тухса чĕлĕм чĕртме тăрать. Аван марне сиссе.*)

Ака турăм, ĕшентĕм,
Ăшăм çунать çавтерех.
Яшка хыççăн шыв ĕçрĕм,
Туйăнчĕ эрех пекех...
Ах, хыт ĕшентĕм пулас...
Çынна шанас килменрен,
Пур çĕре те хăвах çит...
*(Тайкаланма пуçлать.)*
Ак... ха, ку мĕн чĕмере?
*(Чӳречe умне тайкаланса пычĕ.)*
Нарспи, часрах кĕр пӳрте!
Ыйăх килет, вырăн сар!
*(Вырăн патнелле утать, çитеймесĕр урайне тĕшĕрĕлсе анать. Хырăмне тытса ахлата-ахлата йăваланать.)*
Мĕн чĕмери пулчĕ ку?..
Ниепле чăтмалла мар...
Ах, ай!.. Ăçта çав Нарспи?!
Урайĕнчех вилеп-им?
*(Хытă ахлатать.)*

Шурса кайнă Нарспи кĕрет. Васкаса вырăн сарать.

Нарспи
*(пăшăлтатса).*

Эй, турăмçăм-пӳлĕхçĕм,
Хăçан мана хăтарăн?
*(Тăхтамана тăма пулăшать те вырăн çине вырттарать.)*

Тăхтаман
*(хытă асапланса).*

Мĕн çитертĕн эс мана?
Кала... усал хĕр... арă-ăм!..
Ах, вилетĕп, ай-ай-ах!
Каçар, турă.. çылăха...
*(Çĕклене-çĕклене çапăнать те вилет.)*

Нарспи
*(Тăхтаман çине шак хытса пăхса тăрать. Пăшăлтатса.)*

Вилчĕ. Вилчĕ?! Пўлĕхçĕм!...
*(Питне аллисемпе хуплать. Сасартăк.)*
Мĕскер турăм эп? Мĕскер?..
*(Тĕттĕмленет, чўречерен уйăх çути кĕрет.)*
Ай, хăрушă... турăçăм!..
Мĕскер калĕ-ши Сетнер?..

Куçĕсене чарса пăрахать, алăк патнелле кутăн чакса пырать, чакнă маях сентре кашти çинчен пысăк тутăр илсе пĕркенет те, Тăхтаман çине сехĕрленнĕн çавăрăнса пăхса, хăвăрт тухса каять.

ЧАРШАВ

## 3-мӗш картина

Сӗм вӑрман. Ҫуллахи ӑшӑ кун. Вӑрман хӑй пурнӑҫӗпе пурӑнать.

Йывӑҫсем хушшипе Сетнер утса тухать. Таҫта аякра тӑмана кӗвиклетни илтӗнсе каять.

Сетнер
(*чарӑнса тӑчӗ, ун-кун пӑхкаласа илчӗ*).

Ентӗ тӑманасем те
Кӗвиклетме пуҫларӗҫ...
Хӗвел анса ларасси
Ентӗ инҫех юлмарӗ.
Ҫапах нумай кӗтнӗ пек,
Кун иртмессӗн туйӑнать...
Каҫ пултӑрччӗ хӑвӑртрах.
Пӗтӗм аслӑ тӗнчене
Хура чаршав хупласан—
Ҫитес тенӗ вырӑна
Шӑппӑн пырса тухӑп эп,
Сисеймӗ те ман тӑшман...
(*Пауза.*)
Ӑшӑм ҫунать вут пекех.
Ҫиллӗм йӳҫсе хӑпарать.
Каҫхи уҫӑ вӑрман та
Чуна пӑччӑн туйӑнать...
(*Кӗпе ҫухине вӗҫерсе ярать.*)
Эй, Нарспиҫӗм! Эп сана
Хам хуйхӑма пӗлтерме
Кӑкӑрӑма чар! ҫурса

Кăтартăттăм чĕреме!
Ăнланăн-ши эс мана?
Таса хĕмлĕ юрату
Сўнмен-ши сан чĕрўнте?
Ĕлĕкхи пек пĕр тату,
Пĕр кăмăллă пулмашкăн
Хатĕр-ши эс, савниçĕм?
Телейĕме каялла
Кўрĕн-ши эс, Нарспиçĕм?..
Сана манран уйăрса
Тăшман илсе кайсассăн,
Кунĕн-çĕрĕн хуйхăрса
Çутă куçăмсем манăн
Тĕксĕмленме пуçларĕç,
Тăлăх юлнă пуçăма
Хура пĕлĕт хупларĕ.

(*Пауза.*)

Тискер иккен пурăнăç
Савнă туссăр пурăнсан.
Ман тусăма — телее
Туртса илтĕн, Тăхтаман!
Анчах, пĕлеп, шанатăп,
Эсĕ ун юратуне
Укçапалан илеймĕн,
Саламатпа çĕнеймĕн.
Таса этем нихăçан
Усал хурри пулас çук,
Мĕнле йывăр килсен те

Хăйĕн чунне сутас çук.
Эсир вăйпа, укçапа
Пăхăнтарма пăхатăр.

Вăя хирĕç вăй кирлĕ,–
Апла пулсан — эп хатĕр!
Пĕлетĕп эп, Тăхтаман,
Ирсĕр тĕнче — сан енче,
Анчах, Сетнер хăраса
Пуç таймĕ ун умĕнче.

Йăваш пулса мĕскĕн пек
Çитет чăтса пурăнма!
Эсĕ, тискер кайăк пек,
Мана савнă тусăма
Туртса илтĕн ирĕксĕр.

Асту, сыхлан, Тăхтаман,
Шăпу тулĕ сан кĕçĕр!
Хăтăлаймăн, ват-супнă,
Йыт вырăнне вĕлерĕп.
Хура юнлă чĕрӳне,
Çăхансене çитерĕп.

(*Пауза.*)

Тĕттĕм пулĕ, каç пулĕ
Тăшман патне çитиччен.
Тăшман чĕри лăпланĕ
Хĕвел кусса тухиччен.
Хĕвел тухĕ, çутатĕ,
Эпĕ пулăп вăрманта.

Тăшман, выртăн, хускалмăн,
Нарспи пулмĕ çумăнта.
(*Хускалса.*)
Васка, Сетнер, ан хăра:
Кĕтнĕ вăхăт çывхарать.
(*Вăрманалла кĕрсе каять.*)

Çанталăк хуллен тĕттĕмленсе ларать. Унтан йывăç çулçисем хушшинчен уйăх çути сăрхăнса кĕрет. Илемлĕ, тÿлек çанталăк. Шăп. Хăрăк туратсене çатăртаттарса Нарспи ыткăнса тухать. Сасартăк чарăнса тăрать. Таçта инçетре, те ÿхĕ, те этем: „о-хо-хо-хо-хо-оо!" тесе кăшкăрни илтĕнсе каять.

Нарспи

Ах, пÿлĕхçĕм! Турăçăм!
Кай, кай! Ан хăрат мана!
(*Тĕттĕм çĕрелле тинкерсе пăхать. Сасартăк темскертен хăраса каялла чакма пуçлать. Пăшăлтатса.*)
Каллех, каллех... Тăхтаман?
Ма килтĕн эс вăрмана?
(*Çил тухни палăрма пуçлать.*)
Кай, кай кунтан, ан çÿре...
Хăрамастăп эп санран!
(*Хăй каялла чакса пырать. Кĕпи туратран çакланать. Вăрман хытă кашлама тытăнать.*)

Эй, турăçăм, пулăшсам,
Хăтар мана усалран...
(*Чакма хăтланать, анчах, кĕпи çакланса ларнă пирки, чакаймасть. Аслати кĕмсĕртетсе авăтса ярать. Нарспи хăранипе „Ах!“ тесе кăшкăрса ярса çĕре ÿкет.*)

Сасартăк çил-тăвăл килсе çитет. Таçта аçа çапать' çиçĕм çине-çинех ялкăшать. Туратсем шатăртатса хуçăлаççĕ. Тÿпере хура пĕлĕтсем... Нарспи ăнран кайса выртать. Çывăхрах Сетнер юрлани илтĕнсе каять.

Сетнер
(*вăрманта*).

Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн чуна хăратан?
(*Кăшт тăрсан Сетнер юрласа тухать, Нарспие асăрхамасть.*)
Ах, ман хуйхăм, итле-ха:
Мĕншĕн мана çунтаран?
Мĕншĕн мана, тăлăха,
Савăнăçа мантаран?
Çуралтăм мĕн аннерен
Хĕн-хур, асап курма çеç.
Çав асапран, хĕнлĕхрен
Çамрăк пуçăм пĕтни çеç.

Сетнер Нарспие асăрхамасăрах тухса каять. Халь ĕнтĕ вăл юрлани вăрманта илтĕнет, аяккалла кайнăçем шăпланса, шăпланса пырать.

Çамрăк пуçăм пĕтмĕччĕ,
Мулăм çукки пĕтерчĕ,
Вăл та пулин юрĕччĕ,
Çын ухмаххи пĕтерчĕ.
Çын ухмаххи юрĕччĕ...

*(Çак самантра Нарспие ăн килсе кĕрет, вăл ерипен пуçне çĕклет.)*

Усал тăшман тупăнчĕ.
Усал тăшман пĕтĕччĕ,
Турă çырни курăнчĕ.

Нарспи

Мĕн ку? Ăçта? Ăçта эп?
Юрланă пек илтрĕм-çке?

*(Итлесе тăрать, анчах сасă çук.)*

Ахаль анчах пулчĕ-шим?
Тĕлленмерĕм пулĕ-çке?

*(Ерипен тăрать, каллех аслати авăтать, çиçĕм çисет. Инçетре: „О-хо-хо-хо-хо-о-о!“ тенĕ сасă илтĕнсе каfive.)*

Арçурисем асаççĕ,
Янратаççĕ вăрмана...
Эй, пӳлĕхçĕм, хăтарсам,
Ан асаплантар мана.
Кун пек асап яриччен,
Ма чунăма илместĕн?..
Тăнран тухрĕ мĕскĕн пуç,
Ниçта кайма пĕлместĕп...

(*Пауза.*)

Ăçта кайса кĕрес ман?
Хăçан иртĕ тискер каç...

(*Утса кайма тăрать.*)

Каллех... Каллех... Тăхтаман?
Хăрамастăп. Кай теп, кай!
Ах, Сетнер! Сетнер! Сетнер!..

(*Чупса тухса кайрĕ. Аслати авăтрĕ, çиçĕм çиçрĕ, аçа çапрĕ. Вăрман кашлать. Инçетрен Сетнер юрласа килни илтĕнет.*)

Сетнер
(*вăрманта юрлать*).

Хура вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн çаплах хыт шавлан?
Савни пекех юрласа
Манăн чуна вăратан?

Тĕттĕм вăрман, сĕм вăрман,
Анултала тăлăха.

(*Килсе кĕрет.*)

Савни пекех юрласа
Ан хăварсам хурлăха.
Аслă вăрман, сĕм вăрман,
Мана чăнне кала-ха!
Мĕскĕн чуна шеллесе
Чун савнине кăтарт-ха.

(*Чарăнса тăчĕ.*)

Ăçта çĕтсе çӳреп-ши?
Пĕтĕм тĕнче хускалчĕ
Мана хирĕç. Пӳлĕхçĕм!
Кама усал турăм-ши?
Тăхтамана хӳтĕлен?!
Мĕн усси пур çĕр çинче
Ун пек ирсĕр этемрен?
Çу-ук, ылханлă тĕнче!
Çын чыслăхне таптаймăн!
Вĕри чĕрем сӳнмен-ха,
Хаяр çиллĕм иртмен-ха,
Тавăрăпах тăшмана.
Ăшне йăтса кăларăп!
Ун аллинчен Нарспие
Хăтарăпах, хăтарăп!..

(*Пауза. Таçта ĕсĕклесе макăрнă сас илтĕнет, вăл сас çывхарнăçем çыв-*

*харса килет. Сетнер тăн-н итлесе тăрать.)*

Çын макăрать мар-и çав?
Чăнах. Хĕрарăм сасси.
Ман пек мĕскĕн пур пуль çав...

(*Сасă еннелле ерипен, асăрханарах утать. Ана хирĕç Нарспи макăрса тухать. Тĕлĕнсе.*)

Мĕн куратăп? Пÿлĕхçĕм!
Ырă турă, çырлахсам!
Нарспи, Нарспи, эсĕ-им?

Нарспи

(*тĕлĕнсе*).

Сетнер!..
(*Хыттăн ĕсĕклесе ярса Сетнер мăйĕнчен çакăнать.*)

Çил лăпланать. Тул çутăлса килет.

Сетнер

(*Нарспие ачашласа*).

Нарспи, телейĕм!..
Лăплан, тусăм... Ан макăр...

Нарспи

Эсех-и ку, Сетнерĕм?

Сетнер

Эпех, чунăм, пăх, акă...

*(Нарспи Сетнер çине ытараймасăр пăхать. Çав вăхăтра вĕсем çине хĕвел çути ÿкет. Кайăксем юрлаççĕ.)*

Нарспи

Чĕлхем хытсах ларчĕ-çке,
Ним калама пĕлместĕп.

Сетнер

Эп сан шухăш-кăмăлна
Сăмахсăрах сисетĕп.

Нарспи

Сана кунта курасса
Ĕмĕтленмен пĕрре те.
Епле килтĕн, Сетнерĕм?

Сетнер

Килтĕм... Сана хăтарма
Шут тытнăччĕ, савнийĕм.
Вăйлă тăвăл тухрĕ те,
Çĕтсе кайса çÿрерĕм.

Нарспи

Манман эппин эс мана?

Сетнер

Ăçта ĕнтĕ... Куратăн...

Нарспи

Эпĕ хам та сан патна
Пыма тесе тухсаттăм...

Сетнер

Эй, апăршам. Чăнах-и?

Нарспи

Ак, хĕвел пур. Сăмахăм
Чăн иккенне курать вăл.

Сетнер
(*ачашласа*).

Епле сана юратмăн?!
Атя, тусăм, кайăпăр.
Савăнтарар аннене.

Нарспи
(*салхуланса*).

Ятăм çĕрчĕ-çке, Сетнер...

Сетнер

Çук, çук, Нарспи, кирлĕ мар...
Ан асăн халь иртнине.

Пӗрне-пӗри пӗлетпӗр,
Ҫичӗ ютри ҫынсем мар.
Тăшман мăшкăл кăтартни
Чармӗ пире пурăнма.
Пирӗн хӗрӳ юрату
Каллех ҫунӗ хӗвел пек!
Эсӗ маншăн ҫав-ҫавах —
Ҫурхи сарă чечек пек...
Телейлӗччӗ вӗт эпир,
Аса ил-ха иртнине?

Нарспи

Тӗрӗс, Сетнер. Хам ӗҫе
Ахалех мар тунине
Ӗнентӗм эп тепӗр хут.
Ӗнтӗ халӗ вилсен те
Санран уйрăлассăм ҫук.

Сетнер

Текех хам та эп сана
Никама та парас ҫук!

(*Хӗрӳллӗн ыталанса чуптăваҫҫӗ.*)

ЧАРШАВ.

# ТĂВАТТĂМĔШ АКТ

## 1-мĕш картина

Чухăн хресчен пўрчĕ. Чалăшса кайнă пĕчĕк чўрече. Чўрече витĕр анса ларма пуçланă хĕвел çути кĕрет. Пўртре пĕчĕкçеç сĕтел, тăрăх сак тата тенкелсĕр пуçне нимех те çук.

Урамра кĕтў кĕртнĕ сас илтĕнсе тăрать, кĕçех вăл та шăпланать.

Нарспи шухăша кайнă та урамалла пăхса ларать.

Нарспи
(*ассăн сывласа*).

Çак вăхăтра яланах
Чуна тискер туйăнать.
Каç пулсанах Тăхтаман
Ман куçăма курăнать.
Часрах Сетнер килинччĕ,
Унпа чухне шухăшсем
Таçта вĕçсе каяççĕ.
Ун чух манăн куçăмсем
Сетнере çеç кураççĕ...
(*Сетнер кĕрет.*)

Сетнер
*(савăнăçлăн).*

Каçар, Нарспи, куннинче
Часах таврăнаймарăм.
Ыран хам ĕç пур тесе,
Çынна кĕрĕшнĕ ĕçе
Пĕтермешкĕн шутларăм.
Э-э, тусăм, мĕн пулнă?
Салхуллă-çке эс паян?
Эп айăплă пулсассăн,
Лăска мана хăлхаран.
*(Нарспи куçĕнчен пăхать, ачашлать.)*
Кала, мĕншĕн салхуллă?

Нарспи

Çук-çке!

Сетнер

Ай, чĕлхӳ суять,
Анчах чĕрӳнте пурри
Куçран пăхсах курăнать.
*(Нарспи çумне ларать.)*

Нарспи

Канăç çук çав... ăш вăркать.
Кала, мĕскер тăвас ман?
Хыçран пĕрмай шăл-йĕрсе
Çӳрет усал Тăхтаман.

## Сетнер

Ан шухăшла ун çинчен,
Иртнĕ ĕнтĕ, пĕтнĕ вăл.
Телейӳне тупрăн-тăк,
Хуйха манма çăп-çăмăл.
Лăплан, чунăм, ан кулян.
Ыран акă, иксĕмĕр
Уйра çанă тавăрса,
Çуммăн тăрса ĕçлĕпĕр...
Мĕнле ĕçчен хĕрччĕ эс!
Улăх ути çулнă чух
Ыткăнаттăн чи малтан—
Никам хуса çитес çук.
Е тыр вырма тухсассăн,
Санăн аллу-урусем
Выляса çеç пыратчĕç,
Тĕлĕнетчĕç ял-йышсем.
Астăватăн-и тата,
Иксĕмĕр те ачаччĕ...
Пĕрре епле вăрманта
Хĕрсем çырла пухатчĕç.
Вĕсен савăк юррисем
Янрататчĕç вăрмана.
Ун чух çур чĕрес çырла
Татса патăм эп сана.
Эсĕ темшĕн чĕнмерĕн.
Анчах, хура куçусем

Чӗремренех йӗплерӗҫ,
Чуна вӑратрӗҫ вӗсем.

Нарспи
*(ун ҫумнелле йӑпшӑнса).*

Мӗнле хитре калан эс!
Чӗкеҫ чӗлхи пулӗ сан.

Сетнер
*(ачашласа).*

Ҫав каҫ киле таврӑнсан
Каҫ выртса ир пуличчен
Чӑлкӑм куҫ та хупмарӑм,
Шухӑшларӑм сан ҫинчен..
Эсӗ ытла сӑпайран—
Пуян хӗрӗ ҫав, теттӗм.
Ҫынпа пит калаҫманран—
Мӑнкӑмӑллӑ пуль, теттӗм.

Нарспи

Уншӑн мар, Сетнер, ҫук, ҫук,
Вӑтанаттӑм эп ун чух.

Сетнер

Пӗртте ытти хӗрсем пек
Марччӗ ҫав эс ун чухнех.
Тӗлӗнеттӗм эп санран,
Ӑнланасчӗ кун чунне,
Теттӗм вара тӗл пулсан.

Нарспи
(*хавасланса*).

Ун чух, тусӑм, сан ҫинчен
Эп те ҫаплах шутлаттӑм.
Анчах, хӑвна тӗл пулсан,
Чӗлхесӗр пек пулаттӑм.

Сетнер

Ӗмӗтӗмпе пӗлӗтех
Хӑпараттӑмччӗ ҫиҫсе,
Ҫунатӑмсем пур пулсан,
Кайнӑ пулӑттӑм вӗҫсе...
Анчах, мӗскӗн пурнӑҫа
Илеттӗм те асӑма,—
Ӑшӑм ҫунма пуҫлатчӗ,
Усаттӑмччӗ пуҫӑма.
Мӗншӗн чухӑн-ши эпир?
Мӗншӗн пирӗн ним те ҫук?—
Теттӗм вара аннене,
Ӑшӑм тулса ҫитнӗ чух.
„Турри ҫапла ҫырнӑ пуль“,
Тетчӗ анне яланах;
Килӗшеттӗм пурнӑҫпа,
Ӗненеттӗм эп ӑна.
(*Нарспие кӑкри ҫумне пӑчӑртаса.*)
Эх, Нарспи! Пӗлесчӗ сан...
Ҫӑва тӗпнех... иртнине!
Халь, ак, телей ҫитрӗ ман!

Нарспи
(*ахӑлтатмах пуҫлать*).

Ай, турӑҫӑм, Сетнерӗм,
Хӗрхен аяк-пӗрчине!
Пӑчӑртаса вӗлерӗн
Хӑвӑн ӑссӑр Нарспине.

Сетнер амӑшӗ турӑх илсе кӗрет. Нарспи, вӑл кӗнине сиссенех, Сетнер ытамӗнчен хӑтӑлать, Сетнере вӑрттӑн пӳрнипе юнать.

Сетнер амӑшӗ

Сирӗн валли кӳршӗрен
Турӑх илсе килтӗм-ха.
(*Турӑхне сӗтел ҫине лартать.*)

Нарспи

Кирлӗ марччӗ чӑрманма.

Сетнер амӑшӗ

Килӗр, ларса ҫиийӗр-ха.
Чӑрмавӗ ун—ҫавӑн чуль...
Ларса ҫиийӗр, ачамсем,
Хырӑмӑрсем выҫрӗҫ пуль.

Сетнер

Тӗрӗс. Хырӑм—ҫурӑм мар...
Ларса ҫиер пуль, Нарспи,

Кăмăл тăвар аннене.
(*Сĕтел хушшине лараççĕ. Сетнер амăшĕ кашăксем парать, çăкăр касса хурать.*)

Сетнер амăшĕ

Тутлă терĕç турăхне...
Çийĕр, çийĕр, ачамсем.
Урăх ним те пулмарĕ.
Çапла-çке вăл чухăнсен...

Сетнер

Ялан капла пулмĕ-ха,
Уншăн ватас мар пуça.
Çине тăрсан, малашне
Майлăпăр ха пурнăçа.

Нарспи

Ĕçлекен çын выç вилмен,
Вилмĕпĕр-ха, эпир те.

Сетнер

Пĕр ятăма çĕрĕм пур,
Тăрмашăпăр уй-хирте.

Сетнер амăшĕ

Çапла шĕкĕр пурăнма
Турă хуштăр, ачамсем.
Сирĕн телее курса
Савăнччĕрччĕ куçăмсем.

Тулта ура сасси́сем. Михетерпе карчăкĕ кĕреççĕ.

Карчăк

Пирĕн Нарспи ку пӳртре
Çук-ши тесе килтĕмĕр.
Ялти ырă çынсенчен
Кунта тесе илтрĕмĕр.

Нарспипе Сетнер вĕсем кĕрсенех çиме чарăнаççĕ.

Михетер

Эх, хĕр, хĕ-ĕр... Хĕр-и эс!
Нарспи, мĕскер хăтлантăн?
Епле çынсем умĕнче
Çак намăса кăтартрăн?

Карчăк

Мĕн çитмен-ши ухмаха,
Пуян хĕр ятне çĕртме?
Çак Сетнерпе вăрманта
Лапăштатса çӳреме?

Михетер

Турра шĕкĕр, — халиччен
Усал сăмах илтменччĕ,
Çак тарана çитиччен
Киремет те тивменччĕ,
Манăн килĕм-çуртăма
Ыр пирĕшти пăхатчĕ,

Ыр пирĕшти пăхнипе
Ялта ятăм каймаччĕ.
Çак тарана çитрĕм те,
Ватă пуçăм усăнчĕ.
Эсĕ çапла пулнипе
Ырă кунăм пăсăлчĕ...

Карчăк
(*Михетере*).

Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Ĕçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне!

Михетер

Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм,
Хĕр кăмăлне татмарăм.
Савнă хĕршĕн пуянлăх
Кунĕн-çĕрĕн пуçтартăм.
Хĕр телейшĕн тăрăшса
Пуян каччă шырарăм.
Каччă патăм, туй турăм,
Паян, акă, мĕн куртăм!

Карчăк

Шеллеместĕн аннӳне,
Ах, çĕр çăтманă пуçна!
Камăн хĕрĕ пултăн-ши,
Кам ӳстерчĕ-ши сана?

## Михетер

Мĕн кĕçĕнрен ÿстертĕм
Питне пăхса савăнма.
Çак тарана çитрĕм те,
Хĕрĕм çирĕ пуçăма.
Аçу-аннÿ ирĕкĕ
Пулчĕ çĕрĕ выранне.
Пĕр Сетнершĕн тăктартăн
Аçу-аннÿн шур çÿçне.
Пулăшмарĕ пуянлăх,
Пулăшмарĕ сăмах та.
Пуян каччă çумĕнче
Апла пулмĕ ухмах та.

## Нарспи

*(халиччен пуçне чиксе чĕнмесĕр тăнă хыççăн).*

Эй, аттеçĕм, пурнăç мар
Савман каччă килĕнче.
Пуянлăхра анчах мар,
Ыр курасси,—çыннинче...

## Карчăк

Е-е, усал, ытлашши
Ан кар ĕнтĕ çăварна.
Аннÿн ăшне çунтаран,
Турран килесшĕ пуçна!

Михетер

Çак намăса кăтартрăн,—
Ялти сынсем мĕн калĕç?
Хĕрне ан ман, ват супнă!—
Тесе, тĕксе кăтартĕç.
Анчах ялти çăварсем
Кирек мĕскер калаçчĕр,
Яту çĕрнĕ пулсан та,
Çапах эсĕ манăн хĕр.
Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк çак пӳртрен.
Тепĕр каччă тупăпăр
Яту çĕрсех кайиччен.
Атя, Нарспи, ан хуйхăр:
Санăн аçу пур вĕт-ха.
Яту пĕтнĕ пулсан та,
Аçун мулĕ пур вĕт-ха.

Карчăк

Атя, путсĕр, хăвăртрах,
Пĕртте мана пăхмастăн.
Сетнер, йытă, кĕççе пит,
Пуян хĕрне ан хапсăн!

Нарспи

Эй, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн мана çиетĕр?
Намăс кӳнĕ хĕрĕре
Хăвăр пата чĕнетĕр?..

Карчăк

Ав, тата мĕн калаçать,
Савнă хĕрне итле-ха.

Михетер

Çитĕ, карчăк, вулама,
Хĕр сăмахне итлер-ха.

Нарспи

Арăм пулнă пуçăмпа
Киле пырса тăрăп-и,
Савман качча кайсассăн,
Татах асап чăтăп-и?
Çук, çук, мана ан чĕнĕр:
Халь тин киле пыраймăп.
Çапла пулса пĕтсен тин
Каччă кĕтсе лараймăп.
Эсир мана ӳстертĕр,
Ача чухне юратрăр,
Анчах, ӳссе çитрĕм те,
Хĕрĕр чунне курмарăр.
Эпĕ сире кĕл-турăм,
Эпĕ сире йăлăнтăм,
Вĕçне çите пуçласан
Йăваланса макăртăм.
Анчах эсир хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр,
Ӳстертĕр те укçашăн

Сутса ярса пĕтертĕр.
Ача чухне хĕрĕре:
Юрагатпăр, теттĕрччĕ,
Савнă хĕрĕр мĕн ыйтнă
Ăна пурте хатĕрччĕ.
Ӳссе çитрĕм. Аттене:
Пĕр çул кĕт-ха, терĕм те,
Атте вăрçса пĕтерчĕ,
Анне çӳçрен сĕтĕрчĕ.
Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса ятăн кашкăра?
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕн пурĕ те укçара...
Эпĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, эпĕ мар.
Сетнер кĕрӳ пулмасан,
Эпĕ сирĕн хĕрĕр мар!

Карчăк

Ав, ав, хĕрӳ мĕн калать —
Сетнер, шуйттан, илĕртнĕ.
И-и, Михетер, каяр-ха,
Хĕрӳ çине сур ĕнтĕ!

Михетер

Ы-ых, Сетнер, астăвăн:
Манăн хĕре эс çирĕн!

Сетнер

Пĕрне-пĕри савнăшăн
Айăплама пултаран.
Анчах этем чĕрине
Вăрçнипе ăçтан чаран?

Михетер

Çитĕ! Кĕлмĕç сăмахне
Чыслă пуçпа итлĕп-и?

(*Нарспие.*)

Эсĕ, çавтер усал хĕр,
Хура пÿртрех тип эппин!
Аçу килне, чим халĕ,
Хăвах чупса пырăн-ха.
Аçу мĕнле ыррине
Çавăн чухне курăн-ха.
Атя, çитĕ, карчăкăм,
Каяр пулĕ килелле.
Сăмах вĕçне тухаймăн
Тăнран тухнă хĕрпеле.

Карчăк
(*сура-сура ылханать*).

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр хăрăк турат пек!

Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!
(*Михетерпе иккĕш тухса каяççĕ.*)

Нарспи

(*чăтса тăчĕ-тăчĕ те*
*хӳхлесех макăрса ячĕ*).

Ах, Сетнерĕм!..

Сетнер

Ан йĕр, тусăм.
Тăвăл иртсе кайрĕ халь.

Нарспи

Мĕншĕн мăшкăл тӳсеп-ши?
Мĕн тунă эп, кала-ха?

Сетнер

Лăплан, чунăм, ан хурлан.

Нарспи

Мĕнле атте-анне вăл,
Сура-сура ылхансан?

Сетнер амăшĕ

Пуян тавраш çапла вăл.
Укçа пĕрми вĕсемшĕн

Ачинчен те хаклăрах.
Усал чĕлхе ылханни
Ытă тĕлне пултăрах.

Сетнер

Ан кулян-ха, Нарспиçĕм.
Темте пулать тĕнчере.
Ĕмĕр вăрçса пурнаймĕ
Аçу-аннӳ те пире.
Аса илĕç-ха вĕсем
Хăйсем вата иккенне,
Асăнĕç те хĕрхенĕç
Асап кӳнĕ Нарспине.
Анчах пирĕн пурнăçа
Вĕсем туса парас çук.
Авалхисем каларĕш:
Çӳлтен кĕрпе çăвас çук.
Эпир хамăр телее
Хамăр тупма пĕлмелле.

Нарспи

Эсĕ пулман пулсассăн,
Ăçта кайса кĕрĕттĕм?
Телей мĕнне пĕлмесĕр,
Çĕр айĕнче çĕрĕттĕм.
Атте-анне хăй хĕрне
Ырлăх пама пĕлмерĕ,
Анчах санпа хăçан та
Телейлĕ эп, Сетнерĕм!

Çутă сӳнет те татах çутăлать, анчах халь ĕнтĕ çĕрле: пӳрте чӳречерен кĕрекен уйăх çути çеç çутатать. Пурте çывăраççĕ. Чылайран урамра: „Хура-ах! Хура-ах! А-а-ай!" тесе кăшкăрнă сасă илтĕнсе каять. Сетнер хăвăрт сиксе тăрса хăй çине сăхманне уртса ярать. Урамра татах шар-ии! кăшкăрнă сасă илтĕнсе каять.

Сетнер амăшĕ

(*кăмака хыçĕнчен тухса*).

Тур çырлахах! Мĕн пулнă?

Сетнер

Анне, наччас чупам-ха...
(*Чупса тухса каять.*)

Сетнер амăшĕ

Асту, ачам, тем курăн...
(*Чӳречине уçса итлесе тăрать. Аякра кăшкăрашнă сасăсем илтĕнеççĕ.*)
Мĕн пулнă ку халăха?
Пĕтĕм яла янратаç...
Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм...

(*Çывăрса выртакан Нарспи патне пырать.*)

Нарспи
(*тĕлĕкĕнче*).

Сетнер!..

Сетнер амăшĕ

Тĕлĕк тĕлленет...
Çывăр, кинĕм, çывăрах.

(*Тулта кăшкăрса чупнисем илтĕнеççĕ.*)

Сасăсем

— Михетере çаратнă!
— Пĕр япала хăварман!..

Сетнер амăшĕ

(*ун-кун чупкаласа çӳрет те Нарспие вăратать*).

Нарспи, кинĕм, вăран-ха,
Тăр-ха часрах!.. Турçырлах!..

(*Васкаса тухса каять*).

Нарспи
(*тăрса ларать*).

Сетнер!.. Ăçта кайнă вăл?

(*Урамри сасăсене илтсе сиксе тăрать.*)

Мĕн шавлаççĕ урамра?
Ани, ани, ăçта эс?..

(*Чӳречерен пуçне кăларса итлесе тăрать. Шавласа килнĕ сасăсем илтĕнеççĕ.*)

Сасăсем

— Мĕскер пулнă? Ма шавлаç?
— Михетере çаратнă!
— Пĕр япала хăварман.

Нарспи

Мĕн илтеп эп, турăçăм?..

Сасăсем

— Çĕрçăтманă вăрăсем,
Турăран та хăраман...
— Михетерпе карчăкне
Иккĕшне те вĕлернĕ...

Нарспи
(*чўрече панчен сиксе ўкет*).

Эй, турăçăм-пўлĕхçĕм!..
Сетнер ăçта çўрет-ши?

Тулта Сетнер амăшĕ уласа макăрни илтĕнсе каять. Нарспи хăвăрт шел тутăр пĕркенсе тухса кайма тăрать, анчах ăна хирĕç çынсем Сетнере йăтса кĕреççĕ.

Нарспи, куçĕсене чарса, кутăн чакса пырать. Сетнере сак çине вырттараççĕ. Амăшĕ çаплах хытă макăрать. Нарспи, мĕн пулнине тин тавçăрса илет те, пуçне аллипе çавăрса тытса „Ах!" тесе çухăрса, Сетнер умне кайса ўкет.

ЧАРШАВ.

## 2-мĕш картина

Кантăр варта. Унта та кунта лапсăркка йăмрасем тĕлĕрсе лараççĕ. Хĕвел тухăçĕ майĕпен-майĕпен хĕрелсе килет. Илемлĕ, тӳлек çуллахи çанталăк. Таçта инçетре куккук авăтать, çывăхрах шăпчăк юрласа ярать, пĕтĕм тĕнче ыйăхран вăранать.

Чаршав уçăлнă май, таçта инçетре-инçетре хурлăхлă кĕвĕ илтĕнет.

Пысăк йăмра айĕнче, çӳллĕ курăк çинче Сетнер амăшĕпе Михетер тарçи лараççĕ. Вĕсем нумай çӳресе ывăнни палăрать.

Тарçă
(*чĕлĕм чĕртсе ярать*).

Инкек курăнса килмест,
Тенĕ авал ваттисем...
Укçа пирки пулчĕ çав...

Сетнер амăшĕ
(*сасартăк хускалать*).

Сас илтĕнчĕ мар-и çав?
(*Иккĕш те итлеççĕ.*)

Тарçă

Çук. Эп Нарспи сассине
Таçтан уйăрса илеп.

Сетнер амăшĕ

Ăçта çӳрет-ши мĕскĕн?
Пур-ши вăл çут тĕнчере?..

Тарçă

Пуринчен те ытларах—
Хĕрхенетĕп Сетнере.
Ачи ытла лайăхчĕ,
Ахаль çирĕçĕ пуçне.
Кам сĕтĕрсе пынă-ши
Ăна Михетер патне?
Çаратĕçин, пуяншăн
Инкек курса тăрас-и?
Чунне сутнă хуçашăн
Ырă пуçа хурас-и?
Леш вăл, турă каçартăр,
Пире нумай макăртрĕ...
(*Пауза.*)
Хурах тесен, ĕлĕк чух,
Çӳç вирелле тăратчĕ.
Анчах, темшĕн, хальхинче
Хăрас-тăвас пулмарĕ.
Çĕрле пĕри пычĕ те:
Эсир пурте пирĕн пек
Нуша курнă çынсем, тет.
Тавай, шăпах пулар та,
Тур панă чух ĕçер, тет.
Эпир хайхи, чăнах та,
(Туйра пире Михетер
Питех хисеп тумарĕ),
Тавай уншăн халь ĕçер,
Тесе, ĕçрĕмĕр мар-и...

Ытларах та пулнă çав;
Вилнĕ пекех сывăрнă,
Михетерпе карчăкки
Çухăрнине илтмен те.
Юлташ тăратман пулсан,
Курмастăмччĕ нимĕн те.
Сиксе тăтăм та хайхи,
Картишнелле чупатăп.
Пăхап, пусма умĕнче
Çын выртнине куратăп.
Тур çырлахах, пĕтрĕ пуç,
Куç-пуç чарăлсах кайрĕ:
Хускалмасăр выртакан
Сетнер пулчĕ те кайрĕ.
Пуç анраса кайнипе
Нимĕн тума пĕлмерĕм.
Сетнер, Сетнер! тетĕп эп,
Анчах Сетнер чĕнмерĕ...

Сетнер амăшĕ

Çитĕ ĕнтĕ, ан кала,
Ан ыраттар чĕреме.
(*Макăрать.*)
Ах, Сетнерĕм, çĕр хута
Унта кайса çӳреме
Усал илĕртрĕ пуль çав...

Тарçă

Лăплан... Ялан йĕреймĕн.

Усал тĕнче пўрнине
Куççулĕпе сиреймĕн.
Ан макăрсам, кинемей,
Кĕç Нарспине тупăпăр.
Пăрахмĕ-ха вăл сана,
Иксĕр пĕрле пурăнăр.

Сетнер амăшĕ

Пĕртен пĕрех ывăлăм
Пурччĕ мана савăнма,—
Хăварчĕçĕ тăлăха,
Пĕтерчĕçĕ ывăлма...
(*Макăрать.*)

Тарçă

Йĕрсе куççуль пĕтес çук.

Сетнер амăшĕ

Ăшчик ытла çунать-çке,
Кала халĕ, мĕн тăвас?
(*Шăппăн макăрать.*)

Çав вăхăтра таçтан инçетрен: „А-у-у-у! Охо-хо-хо!" тесе кăшкăрнă сасă янăраса килет.

Тарçă
(*сиксе тăрса*).

Хайхи тупăнчĕ пулас.
Чим-ха, эсĕ, кинемей,

Ларса юл-ха çакăнта.
Чупса кайса килем-ха,
Кам кăшкăрать çавăнта.
*(Хăвăрт тухса каять.)*

Сетнер амăшĕ
*(итлесе пăхать те, чĕнмесĕр ларать).*

Мĕн пĕчĕкрен ÿстертĕм,
Ачашларăм, йăпатрăм.
Кăшт çитĕнсе çитсессĕн
Суха пуçĕ тыттартăм.
Ватăлмалăх кунăмра
Ырри пулĕ тесеттĕм...
Савăнăçне курмашкăн
Пÿрмерĕ мĕн пÿлĕхçĕм.
Юмăç калана пекех
Килсе тухрĕ пурнăçĕ...
Аннем, ытла ан кулян,
Вилмĕпĕр-ха, пурнăпăр,
Ĕмĕр иртсе кайиччен
Ыррине те курăпăр, —
Тетчĕ вара, эп пăртак
Пăшăрханма пуçласан.
Астăватăп-ха, тата,
Пĕрре çапла улăхран
Чечек татса килчĕ те,
Анне, эс ку чечеке,
Сив шыв яр та чÿлмеке,
Кантăк умне ларт-ха, тет.

Эпĕ ăна çаранран
Нарспи валли татрăм, тет.
Юрĕ, ывлăм, лартăп, теп...
Хĕрĕ те çав, хăй пекех
Ырă, йăваш чунлăччĕ;
Иккĕшĕ те, айвансем,
Пĕр-пĕриншĕн пулнăччĕ.
Ашшĕ-амăш ухмаххи
Пĕтерчĕ çав кăлăхах...
Ăçта-ши вăл, мĕскĕн чун,
Йăпататтăм, тăлăха...

Пĕр енчен шăпăрçă, тепĕр енчен тарçă килсе тухаççĕ.

Шăпăрçă

Ак, хайхисем!.. Эп сире
Киле кайнă пуль, тесе...

Сетнер амăшĕ

Тупăнмарĕ пулĕ çав?

Шăпăрçă

Ăçта кăна çитмерĕм —
Çук, ниçта та курăнмасть.
Ĕнтĕ Кантăр-вар тĕпне
Анасси çеç юлчĕ халь.

Тарçă

Таçтах кайман пулĕ-ха,

Вăл кунталла килнине
Хĕрарăмсем курнă вĕт...

Сетнер амăшĕ

Хуйхи пысăк пулчĕ çав;
Усал шухăш ан тыттăр
Çавăн пирки шикленеп.

Тарçă

Пулĕ. Турă сыхлатăр!
Айтăр, кайса çўрер-ха.
Тупасахчĕ мĕскĕне.
(*Вăл Сетнер амăшне тăма пулăшать.*)

Сетнер амăшĕ

Мĕн çитмест-ши çынсене
Этем ретлĕ пурăнма?..

Шăпăрçă

Тур ан хуштăр малашне
Çын туйĕнче савăнма.
(*Тухса каяççĕ.*)

Чылайран, сценăн тепĕр енчен, Нарспи килсе тухать. Çўç-пуçĕсем сапаланса кайнă ун, çўхе пурçăн тутри хулĕсем çине усăнса аннă. Йăмра тĕлне çитсен чарăнать, халь кайса ўкес пек тăрать.

Нарспи

Ах, Сетнерĕм! Сетнерĕм...
(*Курăк çине тăсăлса ўкет. Чылайччен татăлса йĕрет вăл, унтан, ерипен-ери-*

*пен лăпланса, пуçне çĕклет. Çывăхрах куккук авăтать, кайăксем юрлаççĕ.*)

Чăпар куккук авăтать,
Саркайăксем юрлаççĕ...
Вĕсем пурте телейлĕ,
Вĕçе-вĕçе çӳреççĕ...
Манăн мĕскĕн чĕремре
Тамăк вучĕ явăнать...
Анчах, аслă çут тĕнче
Çаплах çиçет, савăнать...
Эп мĕнтери çуннине
Эсир ăнланас пулсан,
Хĕрхенĕттĕр мĕскĕне,
Юрламăттăр савăнса...
Ун чух эсир ман пекех
Куççуль тăкнă пулăттăр.

(*Пауза.*)

Халь ĕнтĕ эп тĕнчере
Тăрса юлтăм тăр пĕччен...
Никам та çук ĕнтĕ ман...
Тăлăх... Аçта, кам патне
Каяс ĕнтĕ халь тинех?
Хыпса çунан ăшчике,
Кам пусарĕ-ши манне?

(*Шăпчăк юрлать.*)

Ах, шăпчăкăм, ан юрла
Савăнăçлă юрруна.
Сетнер пекех шăхăрса

Ан илĕртсем эс мана!
Куратăн пуль, Сетнер çук...
Сетнер урăх тĕнчере.
Вăр-хурахсем вĕлерчĕç
Манăн савнă Сетнере...
Тăлăх эпĕ... пĕр пĕччен...
Пĕтрĕ атте-анне те
Вăрă-хурах аллинчен.
Мулне пулах пĕтрĕç çав...
Лăплан ĕнтĕ, шăпчăкăм,
Ан хурлантар чунăма.
Эс те савнăç кӳреймĕн
Манăн тăлăх пуçăма.
Тек çут тĕнче илемĕ
Кăмăлăма çĕклеймĕ...
Ирсĕр тĕнче мăшкăлне
Тӳссе, чăтса пурниччен,
Каяс Сетнерĕм патне;
Нӳрлĕ тăпра айĕнче
Телейсĕр чун лăпланĕ.
Хуйха-суйха йăлт манĕ...

(*Куккук авăтать.*)

Куккук çаплах авăтать,
Кантăр-вара янратать...

(*Куккук сасси.*)

Ача чухне эп куккук
Миçе хут авăтнине
Юрататтăм шутлама.

Хам миçе çул пурнассине
Ыйтаттăмччĕ калама.
Ун чух ырăччĕ мана.
Хуйха-суйха пĕлместĕм.
Кунсеренех çарана
Чечек татма çÿреттĕм,
Илемлĕччĕ чечексем...
(*Куккук сасси.*)
Ан авăтсам эс, куккук,
Текех сана итлесе
Кунçулăма шутлас çук...
Кайран, эпĕ çук пулсан...
Ман пек мĕскĕн чунсене
Кĕске ĕмĕр пиллесе
Авăт... йăпат вĕсене...
(*Хĕвел хĕрелсе тухма пуçлать.*)
Хĕвел тухать хĕрелсе...
Ман хĕвелĕм тухас çук:
Юман тупăкри Сетнер
Текех куçне уçас çук...
Ах, Сетнерĕм!.. Сетнерĕм!..
(*Каллех хыттăн ĕсĕклесе макăрса ярать. Чылайччен татăлса йĕрет. Вара, лăпланнăçем лăпланса пырать. Хуллен ура çине тăрать.*)
Эй, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн мана çуратрăр?
Тĕнче асапне курма

Кун çутине кăтартрăр...
Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм,
Мĕншĕн мана чун патăн?
Мĕскĕн çамрăк пуçăма
Пĕр телей те ямарăн.
*(Пауза.)*
Эй, чунăмçăм, çамрăк пуç,
Мĕншĕн капла пултăн-ши!
Пĕтĕм тĕнче хушшинче
Эсĕ пултăн ытлашши...
*(Пауза.)*
Çук, çук, ан илĕрт мана,
Ан пăх ăшшăн, хĕвелĕм,
Çапла ăшшăн пăхатчĕ
Ман куçăмран Сетнерĕм.
Çук, хĕвелĕм, кирлĕ мар...
Сан çуттупа йăпанма,
Ырлăхупа савăнма
Текех ĕнтĕ мана мар.
Йăпат урăххисене,
Телейлĕ мăшăрсене...
Мĕншĕн... мĕншĕн айăплă
Пултăм эп сан умăнта,
Кала, чунилли тĕнче?
Мĕншĕн çӳреп çакăнта
Куççуль тăкса, хурланса,
Хам шăпама ылханса?
Çамрăк, таса чĕремре
Пĕр айăп та çук-çке ман?

Никама та нихçан та
Эп халиччен хур туман...
Харсăр вĕри чĕремре
Юрату çуралнăшăн,
Ырă çамрăк Сетнере
Пĕтĕм чуна панăшăн,
Çак асапа куртăм эп...
Эй, мухтавлă çут тĕнче!
Юрататтăм эп сана,
Анчах çакă çĕр çинче
Телей пулмарĕ мана.

*(Пауза.)*

Вĕсем этем чыслăхне
Улăштарчĕç укçапа,
Ун таса юратуне
Мăшкăл турĕç укçапах.
Çамрăк пуçа çинĕшĕн
Савăнах, усал тĕнче!
Кураймастăп эп сана,
Ылханатăп, ылханап!..
Эс ман лăпкă ăшăма
Тăвăл вĕрсе кĕрттертĕн,
Уяр чуна хупласа
Аçа-çиçĕм çиçтертĕн...
Анчах айăп манра мар.
Йышăнмастăп çылăха.
Çиçех, çиçĕм, çиç, çиçĕм!

*(Тăнран тухса каять.)*

Ха-ха-ха-ха-ха!..
*(Пауза.)*
Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман!..
Ах, çиçрĕ çиçĕм!.. Аслати!..
Ишĕл, ишĕл, çут тĕнче!
Тух, Сетнер, çĕр тĕпĕнчен!..

*(Ун куçне Сетнер курăнса каять, Нарспи аллине тăсса ун патнелле ыткăнать.)*

Ах, Сетнерĕм, чунăмçăм!

*(Йывăçа ыталаса илет.)*

Кала часрах, мĕн тăвар?
Пире тытма килеççĕ,
Ăçта тарса хăтăлар?..
Мĕн?.. Ăçта эп? Мĕн терĕм?
Ăçта кайрăн, Сетнерĕм?
Кил, хам çумма, ачашлам,
Аркăм çине вырттарам...
Ăçта кайрăн, савнийĕм?
Ан пăрахсам Нарспие!..
*(Ăна кĕрет.)*
Никам та çук... Чиперех
Куртăм-çке эп Сетнере?..

*(Сасартăк шари! кăшкăрса ярать.)*

А-ах! Вĕлерне вĕт сана!
Сетнер, тусăм!.. Ах-ха-ха!..

*(Сасартăк хăраса ўкет, аллисемпе хăмсарса каялла чакса пырать.)*

Ай!.. Тăхтаман!.. Кай! Усал!
Эс ман чуна шыратăн!..
Çук, памастăп!.. Ах!.. Сетнер!
Ан кай, эп те пыратăп!..

*(Пуçри тутăрне сĕвсе илет те йывăçсем хушшинелле чупса каять.)*

Пĕр вăхăтлăха шăп. Никам та çук. Çанталăк çавçавах илемлĕ, кайăксем юрлаççĕ. Таçта инçетре Нарспи: „Сетнер! Сетнер! Пыратăп!" тенĕ сасă илтĕнсе каять. Унтан тавралăх шăпах пулса ларать. Хурлăхлă кĕвĕ...

ЧАРШАВ.

---

Редактор **Стихван Шавлы.**

Подписано к печати 16/IV—41 г. НТ 2845 Зак. № 212.
Тир. 3000 экз. Формат бум. $60 \times 92\ 1/_{32}$
Объем 4,25 п. л. авт. листов 4,5.

г. Чебоксары, тип. № 1 Управления издательств
и полиграфии при СНК ЧАССР.

Цена 2 руб. 50 коп.

А. Калган
В. Алагер

# НАРСПИ

на чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941